24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ОКТЯБРЬ 14 ЫТЛАРИКУН 242 (5957) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçар!

Баренцово тинĕсĕнчен Хура тинĕс патне çити тăсăлакан аслă фронтра фашистла сĕмсĕр те тискер тăшмана хирĕç пирĕн Хĕрлĕ Çар геройла тăрса çапăçать. Пирĕн çĕршывăн пурнăç центрĕсем патне сĕкĕнекен захватчиксен çулне тăван çĕршывăн паттăр ывăлĕсем совет хĕçпăшалĕн мĕнпур хăвачĕпе, хăйсен кăкăрĕсемпе пӳлсе тăраççĕ, миллионшар совет гражданнĕсене, хĕрарăмсене, ачасене асаплă вилĕмрен, ирĕксĕрлесе пусмăрлассинчен, хĕнхурпа мăшкăлран çăлса хăвараççĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар, Хĕрлĕ Тинĕс-Çар Флочĕ, халăх ополченийĕ, партизансен отрячĕсем гитлерла бандитсене çĕр çинче те, сывлăшра та, шыв çинче те, шыв айĕнче те паттăрăн хирĕç тăрса кĕтсе илеççĕ. Тăшман çулĕ çинче халăх стена пек пулса çĕкленет. Тăшман хăйĕн малалла ярса пуснă кашни утăмĕшĕн хăй салтакĕсен виллисемпе витĕнтерсех, тăшман малалла кайса пырать-ха. Совет Информаци Бюровĕн октябрĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕнче кăтартса панă тăрăх, Вязьма тата Брянск енĕсенче противник пысăк çухатусем тӳссе пирĕн чăссене хĕссе килме пултарчĕ. Çĕнĕ рубежсем патне чакса, пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç вăйлăн тăраççĕ, противникăн чĕрĕ вăйĕсемпе хĕçпăшалсене пĕтерсе тăкса пыраççĕ. Октябрĕн 11-мĕшĕнче, туллимар даннăйсем тăрăх, фронтăн çав енĕсенче нимĕçсенне 72 танк, войскăсем ларса пыракан тата боеприпассем тиенĕ 220 автомашинăна, 41 оруди пĕтерсе тăкнă. Çапăçусенче нимĕçсем, вилни, сенпе аманнисене пĕрле шутласан, 9 пин çынтан кая мар çухатнă. Гитлер çакăнталла хăйĕн çĕнĕрен çĕнĕ ордисене хăваласа килет. Пирĕн геройла чăссем, подкрепленисем илсе тăрса, тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ, ăна тытса чарма тăрăшаççĕ.

Тăван çĕршывăн хаяр кунсем килнĕ вăхăтра тимĕрлĕхлĕ те йăвашчунлă пулса ларни преступлени туни пулать. Гитлерăн «çиçĕмле» вăрçă планĕсем арканса кайрĕç те, ăна халь ĕнтĕ эпир хăвăрттăн та кĕскен пырса çапнипех пĕтерсе тăкма пултаратпăр тесе шаннипе хамăра-хамăр лăплантарса ларма кирлĕ мар. Германи фашизмне пурпĕрех вилĕм кӳрекен çак вăрçă вăраха тăсăлакан, хаяр йывăрлăхсем тӳстерекен вăрçă, пире пурне те пысăк чăтăмлă та çирĕп, хастар та хăюллă пулма хутакан вăрçă.

Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн çав пахалăх пур. Çав пахалăха Хĕрлĕ Çар ирсĕр тăшмана хирĕç пыракан нумай çапăçусенче кăтартса панă. Вăл çав çапăçусенче пиçĕхсе çирĕпленчĕ. Çав гигантла кĕрешӳре вăл чыслăн испытани тытать. Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнине пуля мухтанчăк та каппайчăк Гитлерăн, хăй тата унăн генералĕсем Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ çине хакламасăр пăхнипе йăнăш тунă тесе, ирĕксĕрех пĕтĕм Германи халăхĕ умĕнче йышăнма лекрĕ.

Хĕрлĕ Çар халĕ ĕнтĕ ку таранччен пулнă испытанисенчен çĕнĕ те чи йывăр испытани умĕнче тăрать. Тăшман мĕн пуррине пĕтĕмпех карттă çине лартнă. Вăл урса кайсах тискеррĕн малалла сĕкĕнет.

Асран тухнă фашистла тискер-кайăкăн çурăм шăммине пирĕн Хĕрлĕ Çар пĕтĕм совет халăхĕ пулăшнипе çирĕппĕн те хăрамасăр, питĕ паттăрăн тăрса çапнипе кăна хуçма пултарĕ. Тăшманăн çухатăвĕсем пысăк, анчах та унăн вăйĕсем нумай-ха. Вилме пуçланă тискер кайăк та, хăйĕн çиллине шăнарăймасăр, ытлашши çирĕпех те чăтăмлах мар тата хăюллах мар çынăрса урипе çапса пуçне салатса пăрахма пултарать.

Хăйсен урнă атакисене туса пырса, хăшпĕр тĕлте парашютистсен десанчĕсене антарса тата ытти çавăн пек майсемпе хитлерсем вăйлă та çирĕп, хастар та хăюллă çынсене пăрахаймаççĕ. Ытлашши çирĕпех те чăтăмлах мар тата хăюллах мар çынсем çĕршывăн тăрăхĕнче çĕкленсе тăраççĕ, Германи фашизмне пурпĕрех вилĕм кӳрекен çак вăрçă вăраха тăсăлакан, хаяр йывăрлăхсем тӳстерекен вăрçă, пире пурне те пысăк чăтăмлă та çирĕп, хастар та хăюллă пулма хутакан вăрçă.

Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн çав пахалăх пур. Çав пахалăха Хĕрлĕ Çар ирсĕр тăшмана хирĕç пыракан нумай çапăçусенче кăтартса панă. Вăл çав çапăçусенче пиçĕхсе çирĕпленчĕ. Çав гигантла кĕрешӳре вăл чыслăн испытани тытать. Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнине пуля мухтанчăк та каппайчăк Гитлерăн, хăй тата унăн генералĕсем Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ çине хакламасăр пăхнипе йăнăш тунă тесе, ирĕксĕрех пĕтĕм Германи халăхĕ умĕнче йышăнма лекрĕ.

Хĕрлĕ Çар халĕ ĕнтĕ ку таранччен пулнă испытанисенчен çĕнĕ те чи йывăр испытани умĕнче тăрать. Тăшман мĕн пуррине пĕтĕмпех карттă çине лартнă. Вăл урса кайсах тискеррĕн малалла сĕкĕнет.

Асран тухнă фашистла тискер-кайăкăн çурăм шăммине пирĕн Хĕрлĕ Çар пĕтĕм совет халăхĕ пулăшнипе çирĕппĕн те хăрамасăр, питĕ паттăрăн тăрса çапнипе кăна хуçма пултарĕ. Тăшманăн çухатăвĕсем пысăк, анчах та унăн вăйĕсем нумай-ха. Вилме пуçланă тискер кайăк та, хăйĕн çиллине шăнарăймасăр, ытлашши çирĕпех те чăтăмлах мар тата хăюллах мар çынăрса урипе çапса пуçне салатса пăрахма пултарать.

Хăйсен урнă атакисене туса пырса, хăшпĕр тĕлте парашютистсен десанчĕсене антарса тата ытти çавăн пек майсемпе хитлерсем вăйлă та çирĕп, хастар та хăюллă çынсене, боеца хĕçпăшал туса парас тесе хĕрарăмсем станок умне тăнине красноармеец пĕлет.

Пирĕн пĕтĕм çĕршыв—вăл хамăрăн правительствăпа Ленин—Сталин партийĕ тавра пĕтĕççе тăнă, аслă та тăван Сталин тавра пĕтĕçсе тăнă халăхăн боевой лагерĕ.

Пирĕн боецсен хастарлăхĕпе вăрçă ĕçĕнчи ăсталăхĕ, командирсемпе политработниксен çирĕплĕхĕ тата вĕсем вăрçă ĕçне ертсе пыма пĕлни, пирĕн мĕнпур халăхăн вăй-хăватне мобилизацилени—çаксем ирсĕр тăшмана çапса аркатса, пĕтерсе тăкмалли шанчăк пулса тăраççĕ.

(«ПРАВДА» хаçатăн октябрĕн 12-мĕшĕнчи умстатьи).

Çамрăксен митингĕ чĕнсе каланине пурнăçлассишĕн

ВАРНАР. Поселокри çамрăксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта фашизма хирĕçле Мускаври митинг пĕтĕм тĕнчери çамрăксене чĕнсе каланине сӳтсе-явăрĕç.

Пуху фашизма хирĕçле Мускаври митинг пĕтĕм тĕнчери çамрăксене чĕнсе каланине анлăн пропагандăлама, ку тĕлĕшпе лекцисемпе докладсем ирттерме, витринăсем йĕркелеме, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем хатĕрлесе парас тĕлĕшпе çамрăксен бригадисене организацилеме, фронта пулăшассине вăйлатма, çар ĕçне тăрăшса вĕренме пулса резолюци йышăнчĕ.

В. МАКСИМОВ.

Хĕрлĕ Çаран высший начальство составĕнчи çынсене çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

ССР Союзăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Хĕрлĕ Çаран высший начальство составĕнчи çынсене ССР Союзăн Верховный Совет Президиумĕ 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнче кăларнă Указпа çирĕплетнĕ çар званийĕсем парас:

ГЕНЕРАЛ-ПОЛКОВНИКАН ЗВАНИНЕ ÇАКНА ПАРАС:

СМОРОДИНОВ Иван Васильевич.

ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĂН ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:

БОРЕЙКО Аркадий Александрович.
ДОДОНОВ Михаил Яковлевич.
ШЕПЕТОВ Иван Михайлович.

ССР Союзăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.
СССР Совнарком Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль.
1941 çулти октябрĕн 12-мĕш.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен октябрĕн 11-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровăн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ çапла пĕлтернĕ: Гитлер октябрĕн 3-мĕшĕнче тухса суя сăмах калана хыççăн çав тема тăрăх пĕчĕкрех турăсем тухса калама тытăнчĕç, тенĕ.

Германи прессин начальникĕ суя халапсем шухăшласа кăларас тĕлĕшпе Геббельспа Дитрих суйма пĕлесси вара пиçех те йывăр ĕç пулса тăрать. Обществăлла шухăш нацистсен мухтанчăк пĕлтерĕвĕсене доказательствăсемпе çирĕплетсе памашкăн ыйтма пултарассине пĕлсе, Дитрих хыттă кăшкăрса çапла калана: «Çав информаци чăннипех тĕрĕс пулнине эпĕ хамăн ырă ятăмпа çирĕплетсе паратăп», тенĕ. Çапла ĕнтĕ, çав мухтанчăк та суя пĕлтерӳсене çирĕплетсе паракан пĕртен-пĕр гаранти вăл—Виççĕмĕш Империри чи ирсĕр мошенниксенчен пĕрин «ырă ячĕ» пулса тăрать.

Халĕ, Хĕвелтухăç фронтĕнче наступлени туса пынă май, çав наступлении питĕ те хăрушă результачĕсем Германире палăрма тытăничченех мораль енчен ăнăçусем туса çолма ĕмĕтленсе, Геббельспа Дитрих суя хыпарсем вĕçсе тухмалли пур алăксене те уçса ячĕç.

Гитлер октябрĕн 3-мĕшĕнче пĕлтернĕ «гигантла пысăк çĕнĕ операцисем» Хĕвелтухăç фронтĕнче Германи войскисем тăвакан хаяр наступлении пуçланчĕç. Фронтăн çак участокĕнче Германия питех те пысăк вăйсем, уйрăмăнах танксемпе авиаци нумай пуçса тăратрĕ. Кĕрешӳ халама çук вăйлăн çивĕчленсе кайрĕ, вăл уйрăмăнах Орел таврашĕнче, Вязьма тата Брянск енĕсенче çивĕчленсе кайрĕ. Кĕрешĕве икĕ енчен те пысăк вăйсем хутшăннă. Çапăçусем кăнтăрла та çĕрле те пулса пыраççĕ, вăл çапăçусенче туртса илнĕ кашни метршăн Гитлер хăйĕн салтакĕсен çĕршер виллине тӳлет.

Çак юнлă тытăçусем хыççăн пирĕн Орелран туха каймалла пулчĕ, вăл хулашăн немĕçсем питех те хаклă тӳлерĕç. Анчах та çакă вара немĕç халăхĕн çавтери начар шухăш-кăмăлне, вилĕ çĕршыв представителĕсен конференцийĕн результачĕсене пичетлесе кăларнă хыççăн уйрăмах начарланнăскерне, Гитлер лайăхлатма пултарнине пĕлтермест, çакă вăл Хĕвелтухăç фронтĕнче хĕл çитсе кĕриччен мĕнле те пулин çитĕнӳ туса, кайран Великобритание хирĕç çапма Гитлер май илнине пачах та пĕлтермест.

Çак наступлении вăл задачăсене пурнăçа кĕртме суккине çапăçусен малтанхи кунĕсемех ĕнтĕ кăтартса паraççĕ. Вилĕ çĕршыв конференцийĕ Германи халăхне вăйлăн шухăллатрачĕ. Пĕр енчен, США-па Великобритани тата, тепĕр енчен, ССР Союзĕ хушшинче килĕшӳ тума çук тесе Германири радиопа Германири пресса демагогла кăшкăрнисем намăслăн путланса ларчĕç. Килĕшĕве тунă, халĕ ĕнтĕ гитлерла Германин тĕнчери вилĕ аслă çĕршывăн пĕрлешӳллĕ вăйĕсене хирĕç кĕрешмелле пулать. Уйрăм вырăнсенче тунă нимĕнле çитĕнӳсем те Германи халăхĕн анлă сийĕсене лăплантарма пултараймаççĕ. Фронтăн уйрăм участокĕсенче Германи çарĕн вăхăтлăха тунă тата çирĕп мар çитĕнĕвĕсем хирех мĕнле пулсан та, çĕнĕ наступлени туса Гитлер хăйĕн çыннисемпе машинисене темĕн чухлĕ çухатса пĕтерсен те,—Совет Союзне стройран кăларас задача ăссăр япала пулса тăрать, мĕншĕн тесен Совет Союзăн çыннисемпе промышленность тĕлĕшĕнчи резервисем вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк, мĕншĕн тесен Совет территорийĕ çине килсе кĕнĕ гитлерла ирсĕрсене тата бандитсене пурне те вĕлерсе пĕтермесĕр, ССР Союзĕнчи халăхсем хĕçпăшала алăран пăрахмаççĕ.

Гитлер Хĕвелтухăç фронтĕнче хĕл умĕнхи тапхăрпа усă курса юлма васкать, анчах çакă вăл, Гитлер Хĕвелтухăçĕнчи салтакĕсене панă хăйĕн приказĕнче ĕмĕтленнĕ пек, ытти фронтсенче çитĕнӳсем пулассине нимĕн чухлĕ те шантарса памасть-ха.

Германия хăйĕн умне пурнăçа кĕртме çук задача—ССР Союзне, Великобритание тата США-на çĕнтерес задача лартнă. Германия юхăнса-хуçăлса пĕтĕ, анчах çак задачăна татса пама вăл пултараймасть. Гитлер çĕршер çапăçусенче çĕнтерме пултарĕ, анчах вăрçăра вăл поражени тӳсет. Çакна пирĕн çĕршыври халăхсемпе çар кăна мар, пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсем те тарăнăн ĕненсе тăраççĕ.

Хĕле кĕме хатĕрленнине тĕрĕслетпĕр

КУСЛАВККА. Выльăхсене тутă тата ăшă витесенче хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе районри комсомолецсемпе çамрăксем чылайранпа ĕçлеççĕ. Силос хывас тĕлĕшпе икĕ хутчен декалник туса ирттерчĕç. Халĕ икĕрнелĕхе хутшăнчĕç. Икĕрнелĕх çинчен ВЛКСМ райкомĕ малтан пуçламăш организацисен секретарĕсене пухса каланă. Унтан районри активран 17 çынна ĕçе йĕркелеме колхозсене кăларса янă. Нумай колхозсенчи комсомол организацийĕсем часах хĕрӳллĕ ĕçе тытăнчĕç.

«13 лет октября» колхозри комсомолецсем (пуçламăш организацин секретарĕ Захаров юлташ) обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнисене çитнине тĕрĕсленĕ хушăра силос хывас плана 192 процент тултарнă, çулçăллă апат 150 процент хатĕрленĕ. Унсăр пуçне витесене тирпейлес тĕлĕшпе ятларласа воскресник туса ирттернĕ. Унта 10 комсомолецпа пĕрле 50 колхозник хутшăнса ĕçленĕ. Выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕсленин итогне пухусенче сӳтсе-явнă, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме ыйтса правлени умне ыйту лартнă.

«Динамо» колхозра та (секретарĕ Чюриков юлташ) силос хывас плана 113 процент, çулçăллă апат хатĕрлессине 287,5 процент тултарнă. Халĕ витесене ремонтлаççĕ.

Анчах хăшпĕр комсомол организацийĕсем икĕрнелĕхе пачах хутшăнман. Салари комсомолецсене (секретарĕ Никонов юлташ) колхозри выльăх-чĕрлĕхе мĕнле хĕл каçарасси пăшăрхантармасть пулас. Вĕсем силос хывас плана тултарман, витесене тирпейлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Улăмсем уйрах сапаланса выртаççĕ.

* * *

ТАВАЙ. «Комсомолец» колхоз выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма апат çитлĕклĕ хатĕрлесе хăварнă. Халĕ ĕне вити туса пĕтереççĕ. Унта 8 комсомолец ĕçлет. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра та ĕне вити тунă çĕрте 12 комсомолец активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

Комсомол организацийĕсем пуçарнипе пулса иртекен тĕрĕслӳ итогĕсене сӳтсе-явнă хыççăн выльăхсене валли ăшă вите, çитлĕклĕ таран апат хатĕрлес тĕлĕшпе комсомолецсем, колхозниксем татăклă сĕнӳсем параççĕ, çийĕнчех çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшаççĕ. Тĕрĕслӳ—вырăнлă, кирлĕ ĕç.

Çапах та Шупашкар районĕнче тĕрĕслев 17 колхозра кăна вĕçленĕ-ха. Çитменнине тата тĕрĕслӳн итогĕсене пухусенче сӳтсе-явса ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе кирлĕ пек мерăсем йышăнмаççĕ.

Выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕç Пăрачкав, Сĕнтĕр районĕсенче япăх пырать.

Кашни колхозри комсомол организацийĕсен октябрĕн 17-мĕшĕнче выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе тухмалла, тĕрĕслӳ итогĕсене комсомолецсен, кирлех пулсан, колхозниксен пухăвĕнче е правлени ларăвĕнче сӳтсе-явмалла, колхозăн выльăх-чĕрлĕхне тутă тата ăшă витесенче хĕл каçарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă, Вязьма тата Брянск енĕсенче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пулнă.

Октябрĕн 9-мĕшĕнче нимĕçсенне 64 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 25 самолет пĕтнĕ.

Октябрĕн 9-мĕшĕнче 10-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 12 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Вязьма тата Брянск енĕсенче противник пысăк çухатусем туса пирĕн чăссене хĕсме пултарнă. Çĕнĕ вырăнсене куçса пырса, пирĕн чăссем тăшмана хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ, противникăн чĕрĕ вăйĕпе хĕçпăшалне пĕтерепĕтерех тăкаççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн чăссем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 76 танкне, вуйкăсемпе боеприпассене турттаракан 220 автомашинине, тĕрлĕ калибрлă 41 орудине тата пулеметсене нумай пĕтерсе тăкнă. Çапăçусенче нимĕçсен 9 пин çынран кая мар вилнĕ тата аманнă. Пирĕн авиаци чăссем фронт патĕнче пĕр аэродромра нимĕçсен тĕрлĕ йышши самолечĕсене 65 самолетран кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче кунĕпех вăйлă çапăçусем пулса пынă. Тăтăшах атакăсем тунă хыççăн противник кунти участоксенчен пĕринче пирĕн оборонăна шăтарса кĕнĕ. Çапăçусем вăйлăн пулса пыраççĕ, тăшман пысăк çухатусем тăвать. Пирĕн летчиксем нимĕçсен салтакĕсем ларса пыракан 100 ытла автомобиле, боеприпассем тиенĕ 150 лава бомбăсем пăрахса çĕмĕрнĕ, нимĕçсен 15 орудине тата бензин тултарнă автоцистернисен колоннине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнче Т. юлташ командир пулса ертсе пынипе кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен горючи усрамалли пысăк базине взрыв туса сирпĕтнĕ тата чугунçул станцине çунтарса янă. Пушар вăхăтĕнче çар хатĕрĕсем тиенĕ темиçе вагон çунса кайнă. Çак отрядри партизансен ушкăнĕ фашистсен ирĕксĕр анса ларнă икĕ моторлă бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă. Партизансен тепĕр ушкăнĕ тăшман штабĕн автомашинине тытса чарнă та взрыв туса сирпĕтсе янă.

Д. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ юлашки вăхăтра нимĕçсен фронталла каякан 5 бронемашинине, 10 грузовикне тата 200 салтакне пĕтерсе тăкнă. Çак кунсенче отрядăн командирне колхозниксем вĕсен ялне нимĕçсен офицерĕсем час-часах пыни çинчен, хресченсенчен тырпул, тĕрлĕ продуктсем туртса илни çинчен пĕлтернĕ. Яла каймалли çул çинче партизансем засада тунă. Нимĕçсен 20 салтакĕсемпе офицерĕсем ларса пыракан автобус курăнсанах партизансен снайперĕ тĕл персе автобус çинчи шофера вĕлернĕ. Автобуса тытса пыракан пулман пирки, вăл çул çинчен пăрăнса кайса канава кĕрсе ӳкнĕ. Машина ăшĕнчен тухса тарса пытанма икĕ офицерĕ кăна ĕлкĕрнĕ, ытти фашистсене партизансем вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Югославири патриотсем нимĕçсемпе итальянецсен войскисене хирĕç хаяр çапăçусем туса пыни çинчен халĕ те ютçĕршывсенчи шичĕ пĕлтерсех тăрать. Елĕк Югослави çарĕнче тăнă, Югославие оккупацинленĕ чухне хăйсен хĕçпăшалĕсемпех вăрмансене тата сăртсене тарса пытаннă регулярнăй чăссем фашистсене хирĕç çапăçаççĕ. Çак войскăсем противникăн коммуникацийĕсене тăтăшах пăсаççĕ. Германин çар чăсĕсем çине пыра-пыра тапăнаççĕ, нимĕçсен гарнизонри службăри салтакĕсене пере-пере вĕлереççĕ. Югославин çак войскисем Германин продовольстви обозĕсене тата çар склачĕсене çĕмĕрсе тăкаççĕ, хăйсем çав обозсемпе складсенчи продовольствипе тата боеприпассемпе усă курса пурăнаççĕ.

* * *

Совет машиностроителĕсем, ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ӳстерсе пырса, Совет Союзĕн оборона хăватне çирĕплетеççĕ. Люберцыри Ухтомский ячĕпе тăракан заводри литейнăй цехри Михалев юлташ ертсе пыракан формовщиксен бригади плана яланах 160 процент тултарса пырать. Метала касса якатас тĕлĕшпе ĕçлекен Н. И. Абрамов юлташ пĕр сменăра виçĕ норма таран тултарать. Юлашки икĕ уйăх хушшинче Абрамов юлташ хăйĕн профессине 4 çĕнĕ рабочие вĕрентнĕ. Мускаври Калинин ячĕпе тăракан заводри механосборочнăй цехра ĕçлекен многостаночник Челышков юлташ паха ĕçĕн тĕслĕхĕсене кăтартса пырать. Пĕр вăхăтрах зуборезнăй тата фрезернăй станоксемпе ĕçлесе, вăл задание 200—250 процент тултарса пырать. Челышков юлташ хăйĕн цехĕнче çĕнĕрен 6 фрезеровщик вĕрентсе хатĕрленĕ, халĕ вăл татах 6 çынна зуборезнăй станокпа ĕçлеме вĕрентет. Мускаври «Станколит» заводĕнчи пысăк япаласем шăратса хатĕрлекен цехри Дудина юлташăн бригади нормăна 150 процент ытла тултарса пырать. Çак бригада пĕтĕмĕшпех çамрăк работницăсенчен: Хĕрлĕ Çар боецĕсен арăмĕсенчен, аппăшĕсемпе йăмăкĕсенчен тăрать. Сехетсем тăвакан пĕрремĕш заводри автоматсен цехĕнчи Дубов юлташ ертсе пыракан бригада график тăрăх тикĕссĕн ĕçлесе пырать. Оборона ĕçне хирлĕ япаласем кăларас плана вăл 125-шер процент тултарать.

Октябрĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă, Вязьма тата Брянск енĕсенче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пулнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем, противникăн пысăк чăссем наступленине хирĕç тăрса, ăна пысăк çухатусем кӳреççĕ. Тăватă кун хушши пынă çапăçусенче çак участокра нимĕçсен фашистла войскисен салтакĕсемпе офицерĕсем 4.000 çын ытла вилнĕ тата аманнă. Тăшманăн 80 ытла танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче противник вилĕ полк ярса оборона линине татса кĕме тата пирĕн войскăсене флангран пырса çапма хăтланса пăхнă. Вăйлă çапăçу пуçланса кайнă, çав çапăçу вăхăтĕнче противникăн 2.200 çын вилнĕ тата аманнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, пирĕн чăссем 6 оруди, 30 пулемет, 5 противотанковăй тупă, минăсем, гранатăсем, патронсем тата ытти çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Балти флочĕн карапĕсем артиллерирен персе виçĕ кун хушшинче нимĕçсен инçе перекен 20 орудине, артиллерин вăтам калибрлă 17 орудине, минометсен 3 батарейине тата противникăн салтакĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енче Германи çарĕ оккупациленĕ районсенчен пĕринче А. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ фашистсем çине кĕтмен çĕртен пыра-пыра тапăнать. Юлашки уйăх хушшинче партизансем нимĕçсен офицерĕсем ларса пыракан 4 çăмăл автомашинăна, штабăн 3 машинине тата боеприпассемпе горючисем тиенĕ 7 грузовой автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Н. станцинчен инçех мар вырăнта отряд пĕр кĕпере взрыв туса сирпĕтсе янă, паровоза стройран кăларнă, автодрезинăна пĕтерсе тăкнă тата виçĕ вырăнта чугунçула çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Нумаях пулмасть, Д. юлташ ертсе пыракан отрядри боецсен ушкăнĕ нимĕçсен командирĕ пуктне çĕмĕрсе тăкнă. Юлашки вăхăтра кăна партизансем нимĕçсен 39 салтакне, 11 офицерне тата фашистсен судĕнче ĕçлекен икĕ чиновникне вĕлернĕ.

* * *

Гитлерла сыпăнисем хăйсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенчи мирлĕ халăхран çаплах тискеррĕн мăшкăлласçĕ, Ленинград облаçĕнчи Оредежски районри Низовка ялĕнчи халăх, фашистсем пĕтĕмпех çараттса хăварнă пирки, пачах выçă ларать. Выçă антăраннине пула хресченсем хушшинче йывăр чирсем пуçланса кайнă. Ивановское, Рождественское тата Никольское ялĕсенче нимĕçсем пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе туртса илнĕ, персе пăрахассипе хăратса, хресченсене хăйсен пахчисенчи пахча-çимĕçсене пухса кĕме чарнă. Рождественское ялĕнче оккупантсем пăшалпа хăратса хресченсене хăйсен пахчисенчи çимĕçсене пухтарнă, вăл çимĕçсене çавăнтах пĕр килограмм юлмиччен туртса илнĕ. Çимĕçĕр пурăннипе вăйсăрланнă çынсене нимĕçсем вăйпах çул юсаттараççĕ тата çĕмĕрнĕ кĕперсене тепĕр хут тутараççĕ.

* * *

Данири хуласемпе ялла районсенче Дани патриочĕсем нимĕçсене хирĕç выступленисем тăвасси кунран-кунах йышланса пырать. Октябрĕн малтанхи пилĕккунлăхĕнче кăна çĕршывра, пуринчен ытла Германи çарĕ валли продовольстви усракан складсенче, нумай пушарсем пулнă. Копенгаген çывăхĕнчи Германи валли консервăсем туса хатĕрлекен фабрикăн складĕнче пысăк пушар пулни çинчен пичетре çырса пĕлтереççĕ. Грено хулинче унта пурăнакансемпе нимĕçсен хĕллехи тумтирсем туртса илекен полицийĕ хушшинче тытăçу пулса иртнĕ. Фашистсен салтакĕсем икĕ хĕрарăма хăйсен ăшă фуфайкисене пама хушнă. Хĕрарăмсем фуфайкăсене пама килĕшмен, вара салтаксем вăйпа туртса илме хăтланнă. Хĕрарăмсенĕ кӳршĕсем хӳтĕлеме тытăннă. Тытăçу вăхăтĕнче икĕ салтака тата пĕр полицейскине йывăр амантнă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

* * *

Совет летчикĕсемпе Англи летчикĕсен ăнăçуллă ĕçĕсем

ÇУРÇЕР ФЛОЧЕ, октябрĕн 11-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Сентябрьте фашистсен войскисем, пысăк подкрепленипе пырса çитнĕ хыççăн, Мурманск енче наступлени пуçласа ячĕç. Суйласа илнĕ гитлерла чăссен сентябрьти наступленийĕ те, июльри пекех, пораженипе пĕтсе ларчĕ.

— Л. юхăншывĕ çинчи çапăçусенче эпир пысăк жертвăсем турăмăр, — тесе каласа парать тыткăна лекнĕ ефрейтор А. Эйтель. — Юханшыв хĕррисем пĕтĕмпех нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен виллисемпе витĕнчĕç.

Фашистсен атакисене сирсе яракĕрпе Çурçĕр тинĕс флочĕн геройла летчикĕсене пысăк тыс тивет. Чи хаяр çапăçусем вăхăтĕнче вĕсем фашистсен наступлени тăвакан речĕсене пала вĕсен тылне те кашни кунах техника хутчен штурмларĕç. Совет бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем тăшманăнне инкĕ переправа çĕмĕрсе антарчĕç, бомбăсем пăраха темиçе склад, вирĕ зенитнăй точка, автоколоннăна çĕмĕрсе тăкрĕç, нимĕçсен пехотине артиллерине çĕмĕрсе тăрса, вĕсем красноармеецсен подразделенийĕсене çĕнтерӳллĕ çапăçма лайăх условисем туса пычĕç.

Совет Çурçĕрĕн тăвăсем çинче фашистсен 133 самолечĕ хăйсен вилĕмне тупрĕç, вуншар самолечĕсене тăшман территорийĕ çинче пĕтерсе тăкнă. Юлашки 20 кун хушшинче кăна Н-ски соединени Англи авиацийĕпе пĕрле кĕрешсе 29 бомбардировщикпа истребителе пĕтернĕ. Совет авиацин историне Совет Союз Геройĕн Сафонов капитанăн эскадрильи мухтавлă страница çырса хучĕ. Хăюллă летчик хăех фашистсенне 15 самолет пĕтерсе тăкрĕ. Нумаях та пулмасть, Сафонов капитан хăйĕн çулнатлă воспитанникĕсене тăшман вырнаçса тăнă çĕре илсе кайрĕ. Малта нимĕç самолечĕсен ушкăнĕ вĕсене пынине курах каяççĕ. Хĕрӳллĕ тытăçу пуçланса каять. Малтанхи минутрах Совет Союзăн Геройĕ тĕл персе тивретнипе тăшман самолечĕсенчен пĕрне ту çине персе анать. Коваленко, Семиненко, Животовский тата Сорокин летчиксем пĕрер «Мессершмитт» персе антараççĕ. Кăнтăрла ирцен патăр летчиксем противникăнне татах 5 самолет персе антарнă.

Çурçĕр летчикĕсен хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ вĕрĕмсĕр пысăк... Старший лейтенант Коваленко пĕлĕтсем хыçне кĕмелли палла парать. Пĕлĕтсем хыçĕнче тăшмансен бомбардировщикĕсем тата вĕсене сыхласа тăракан истребительсем пынă мĕн. Коваленкăпа унăн юлташĕсем атакăна пыкăнчĕç. Фашистсем хăйсен бомбисене лачакана, вăрман çине тата кӳлле пăрахаççĕ те, пикенсех тарма тытăнаççĕ. Анчах Плотниковпа Романов летчиксем тĕл персе никĕ «Мессершмитта» çĕр çумне лапчăтса лартаççĕ.

Октябрĕн 6-мĕшĕнче пиллĕçсен 27 бомбардировщикĕпе истребителĕ пит кирлĕ объект патне вăрттăн вĕçсе пынă. Çапах та пирĕн боецсем тăшмана кирлĕ вăхăтрах курма ĕлкĕрнĕ. Зенитнăй артиллерин картласа тăракан вăйлă вучĕ пиллĕçсен самолечĕсене аркатса янă. Тĕл пенипе фашистсен пĕр машинине часах çĕмĕрнĕ. Совет самолечĕсемпе Англи самолечĕсем пĕлĕтлелле пытăнчĕç. Сывлăппа çапăçу пуçланса кайрĕ. Амосов лейтенант счет пуçласа яракан пулчĕ. Унăн тĕл пырса тивекен пулăшисенчен «Юнкерс-88» самолета вут хыпса илчĕ те лешĕ çĕр çине чул пек персе анчĕ, ун хыççăн Англи майорĕ Рук тата пилот-офицер Фрункс татах икĕ бомбардировщика çапса ӳкерчĕç. Англи летчикĕ Рук «Мессершмитт-109» йышши самолета пĕтерсе тăкрĕ. Противник территорийĕ çинчи сывлăппи çапăçура татах виçĕ самолет персе антарчĕç.

Н-ски соединени штабĕнче халь кăна фашистла летчиксене допрос туса пĕтерчĕç. Сĕтел çинче Гитлер бандичĕсене Польшăри, Францири, Англири мирлĕ хуласем çине бомбăсем пăрахнăшăн пана «тимĕр хĕрессем», «50 боевой вĕçӳшĕн» пана значоксем тата кăкăр çине çакмалли тĕрлĕ жетонсем выртаççĕ. Герман Зерфос лейтенантăн карьери кĕтмен çĕртен пĕтсе ларнăлла пулчĕ. Оккупацленĕ Франципен вăл Заполярьене вĕçсе килнĕ. Кунта ăна виçĕ хутчен кăна вĕçме тивнĕ, ăна совет çĕрĕ çинче тыткăна çăвăрса илнĕ. «Тимĕр хĕрес» тата «50 боевой вĕçӳшĕн» ятлă значок парса награднланă Артау фельдфебеле те çавăн пекех тыткăна илнĕ.

Вĕсем каласа кăтартнинчен нимĕçсен авиацийĕ пысăк çухатусем тӳсни лайăх курăнса тăрать. Зерфос çапла каларĕ: «Гитлерăн юлашки выступленийĕ — Хĕвеллухăçĕнчи тем тĕрлĕ пысăк çухатусем пирки хуйха ӳкнĕ нимĕç халăхĕн шухăш-кăмăлне хăпартма хăтланни пулса тăрать», терĕ. Артау фельдфебель Германи салтакĕсен шухăш-кăмăлне лайăх палăртса парать. «Пĕтĕмпе илсен, салтаксен массăпĕртте вăрçасшăн мар», — тет вăл.

Фашистсен правительстви, салтаксен хушшинчи кăмăлсăрлăха пытарса лартас тесе, фронта штурмовиксен «СА» ятлă уйрăм отрячĕсене ярса тăрать.

Тытăнă лекнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем совет летчикĕсемпе самолечĕсене пысăк хака хурса мухтаççĕ. Пирĕн авиацин чаплă та хăватлă ĕçĕсене вĕсем хăйсен ĕнси çинче тӳссе пăхрĕç ĕнтĕ.

В. ЛЕЗИН.

Ленин хулине геройла хӳтĕлекенсем. Ленинград патне пымалли вырăнсенче Хĕрлĕ Çар сапĕрĕсем геройла ĕçлеççĕ. Вĕсем тăшман пырса кĕрейми пит вăйлă çирĕплетнĕ районсем тăваççĕ. Укерчĕк çинче: Сапĕрсем.

Б. Уткин фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Орел хули патĕнче пулнă иккĕмĕш вăйлă çапăçу

Орел хули сывăхĕнчи пĕрремĕш çапăçура пирĕн войскăсем фашистла йыткĕтĕвĕсене туйса илмеллех çапнă, ун çинчен «Красная звезда» хаçатра пĕлтернĕччĕ. Тăшман чăсĕсем çав çапăçу хыççăн наступлени туса пыма чарăннă. Нимĕçсем унта çапăçура пулман çĕнĕ вăйсене илсе пыма, вĕсене перегруппировка тума тата çĕнĕрен наступлени пуçармашкăн хатĕрленсе çитме шутланă.

Хĕрлĕ Çар чăсĕсем хирĕç тăма хатĕрленсе çитнĕ. Икĕ енĕ те çĕрлехи шыравсене туса пынă. Кăнтăрла танксен пĕчĕк подразделенийĕсем пĕр-пĕрне хирĕç тĕл пулса çапăçасси, артиллерирен пĕр-пĕрин çине пăртах пересси пулса иртнĕ.

Октябрĕн 9-мĕшĕнче тăшман çĕнĕрен наступлени тума пуçланă. Çурçĕр енне лле тапăнса пыма тытăнă. Пирĕн оборонăна татса кĕме тата Орел хулинчен Çурçĕр еннелле куçма тăшман пĕтĕм вăйне пухать пулас.

Çапăçу ирхине, тул çутăлса килнĕ чухне пуçланнă. Пирĕн оборонăна хирĕç нимĕçсем танксен дивизинне тата пысăк йышлă пехотăна кĕртсе янă. Малтан танксен темиçе пĕчĕк подразделенийĕсем курăнса кайнă. Вĕсем разведка туса красноармеецсен чăсĕсен оборонин системине пĕлме, огневой точкисене, артиллери позицийĕсене палăртма тăрăшнă пулас.

Анчах Лелюшенко юлташăн боецĕсем малта тăракан икĕ подразделени вăйĕсемпе тăшман разведкине хытă çапнă, вара вăл, хăйĕн задачине пурнăçа кĕртеймесĕрех, каялла чакнă.

Унтан вара нимĕçсем танксемлĕ пысăк вăйсене çапăçăва кĕртсе янă. Çакă вăл нимĕçсен танковăй войскисем юлашки вăхăтра усă куракан тактикăн уйрăмлăхĕсенчен пĕри. Противника тапăнса вăйсăрлатас шутпа пулас, нимĕçсем малтан çапăçу уйăхирне танксем пысăк мар ушкăнĕсене кĕртсе ярасçĕ, унтан вара ытларах пысăк вăйсене çапăçăва кĕртеççĕ.

Ку хутĕнче те нимĕçсем çав тактикăпах усă курма хăтланчĕç. Пирĕн чăсем тăшманăн шухăшне вăхăтра сиссе илнĕ. Танксен пĕчĕк групписен атакине вĕсем боевой охраненин тата малти подразделенисен вăйĕсемпе сирсе яма тăрăшнă. Тăшман хăйĕн атакисем ăнăçлăн пулса пыманнине, çухатусем тӳснине, анчах малалла кайма пултаймаллине курнă. Çакна пула унăн хăйĕн тĕп вăйĕсене ирĕксĕрех вăхăт çитиччен çапăçăва кĕртсе ямалла пулнă. Танксен вăйлă колонни икĕ енпе наступлени тума пуçланă. Танксем хыççăн пехота пынă. Артиллери оборонăн малти енĕ çине персе тăрассине вăйлатнă.

Оборонăра пулса тăшмана хирĕç кĕрешекенсен речĕсем çирĕп тăнă. Фашистсен танкĕсене снарядсем пăр пек çуни тĕл пулнă. Тăшманăн икĕ машини кăна оборонăра тăракансен окопĕсем патне сывăха пыма пултарнă, вĕсене иккĕшне те горючи тултарнă бутылкăсемпе вут тивретсе çунтарнă.

Çапăçу уйăхĕнче вунпилĕк танк пытла хăварса тата немĕнле результатсем те тăваймасăр, нимĕçсем каялла чакнă та, оборонăра тăракансене фланкран пырса çапма хăтланнă. Анчах вĕсем кунта та чылаях вăйлă оборонăна тĕл пулнă.

Фашистсен танкĕсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе, 8— 10 машина пĕрле, оборонăн вăйсăр вырăнне шыраса пĕр енчен тепĕр енне сиксе ӳкнĕ, анчах вăйсăр вырăн тупайман. Вĕсем урса кайсах атакăланисене пурне те сирсе янă. Тăшманăн ирĕксĕрех тепĕр хут каялла чакма тивнĕ.

Анчах тăшман кун хыççăн та тапăнма чарăнман-ха. Çапăçура пулман çĕнĕ вăйсене илсе пырса, оборонăра тăракан чăсем çине тăшман çине-çинех тапăннă. Каç пулнă тĕле, ку вырăнти çырма-çатрасемпе усă курса, нимĕçсен пехоти пирĕн чăсем патне сывхарма пултарнă. Вăл атакăна тухма пăхнă, анчах ăна пулеметсенчен вăйлăн персе тăнипе кĕтсе илнĕ. Атака пулайман.

Çапăçу тĕттĕм пулса ларичченех пынă. Нимĕçсемшĕн çапăçу ăнăççăр пулнă. Вĕсем Лелюшенко юлташăн боецĕсем хирĕç тăнине сирсе яма пултарайман. Тăшманăн çапăçу уйăхĕнче танксем тата çын виллисем нумай юлнă.

Подполковник А. КРАПИВИН.

Октябрĕн 10-мĕш. («Красная Звезда» хаçатăн спецкорĕ).

Пирĕн çĕр çинчи чăссене сывлăшран пулăшса пыни

ВЯЗЬМА ЕНĔ, октябрĕн 10-мĕш. (Хăмăр спец. корр., телефонпа). Вязьма енче пулса пыракан хĕрӳллĕ çапăçусенче çĕр çинчи войскăсене пирĕн авиаци пысăк пулăшу парса тăрать.

Авиаци нимĕçсен фронт патне пырса тăракан танксен тата пехотăн колонниссене çĕмĕрет, вĕсен аэродромĕсем, войскăсем пухăнса тăнă çĕре, горючисемпе боеприпассем усракан складсем çине вăйлăн пыра-пыра çапать. Çаксемпе пĕрлех противникăн çапăçăва йĕркеленсе тăнă речĕсем çине бомбăсем пырса пăрахать, аялтан вĕçсе тата пикировка туса унăн пехоти тата артиллерийĕ çине перет.

Юлашки икĕ кун хушшинче фашистсене хирĕç çапăçас çĕрте Захаричев майорăн пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем уйрăмах палăрнă. Разведчиксем нимĕçсен çул тăрăх икĕ ретпе куçакан танксен колоннине сăнаса пынă. Танксем çавăн пек массăллăн çапăçăва кĕяи пирĕн çĕр çинчи войскăсене пысăк хăрушлăх тухса тăрсан тин, часть организованно каялла чакнă та, оборонăра çĕнĕ вырăн йышăнса, укрепленипе тунă. Çав çапăçусенче нимĕçсем Марков чăсĕн çухатнинчен темиçе хут ытларах çухатнă. Фашистла ирсĕрсем, йыш тĕлĕшĕнчен чылай маларах пулнипе усă курса, ним умĕнче те чарăнса тăмаççĕ, вĕсем хăйсен войскисем пысăк çухатусем тунине те пăхмаççĕ. Вĕсем атака тăвассине вăйлатсах пыраççĕ, фронта татса шала кĕрсе кайма тăрăшаççĕ. Çапăçусем пур çĕрте те çавтери хаяр пулса иртеççĕ. Уйрăмах Вязьма енĕн центрти участокĕнче çăвăрса пыракан йĕркине сапаласа янă. Темиçе вунпар танка çĕмĕрсе тăкнă, ытти сем сапаланса тарнă. Противник танксен атакине пăлăртса хунă вăхăтра тăвайман.

Çавăн пекех У. станци районĕнче Лезин капитан ертсе пыракан бомбардировщиксем те ăнăçлăн çапăçнă. Ку расра вĕсем фашистсен фронт патнелле васкаса пыракан мотопехотине атакăланă. Тăшман пысăк çухатусем тунă. Нумай автомашинăсем çунса кайнă. Пехота хăраса ӳксе вăрмансене кĕрсе тарнă.

Вăл кун, фашистсен истребителĕсене хирĕç сывлăшра темиçе хутчен çапăçнă тата зенитнăй артиллери вăйлăн персе тăнă пулсан та, Захаричев летчикĕсен çухату пулман.

Паян çав чăсри пикировка тăвакан бомбардировщиксем нимĕçсен аэродромĕсенчен пĕрин çине икĕ хутчен вĕçсе кĕнĕ. Бомбăсем пурте тĕл пырса ӳкнĕ. Пушарсем нумай тухнă: самолетсем, горючи тата боеприпассем усракан складсем çунса кайнă. Аэродром площадки юрăхсăра тухнă.

Летчиксем пирĕн çĕр çинчи чăссене пулăшса тăнă тăшман малалла хăварт куçса пыма шухăшланине салатса ярать.

Капитан П. СЛЕСАРЕВ.

(«Красная Звезда» хаçат, октябрĕн 11-мĕш).

Мелитополь енчи çапăçусем

МЕЛИТОПОЛЬ ЕНĔ, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС спецкорĕнчен телеграф тăрăх). Приазовьере çапăçусем малтанхи пекех пит вăйлăн пыраççĕ. Пирĕн чăссем е пурнăç е вилĕм тесе вăрçаççĕ. Вĕсем ирсĕр тăшман аллине пĕр района та çапăçусăр паман, пĕр район те тăшмана пысăк çухатусем кӳмесĕр унăн аллине лекмен.

Октябрĕн 8-мĕшĕнче тăшман Колосов юлташ хӳтлесе тăракан участок çине хĕсме пуçларĕ. Фашистсем çак участока кӳтлекенсене кунĕпех пĕр аттисыпписĕр аталăларĕç. Пехотăн наступленине танксем тата авиаци пулăшса тăчĕç. Колосов юлташăн чăсĕ пур атакăсене те ăнăçлăн сире-сире ячĕ. Сĕмĕр тăшман флангран çĕмĕрсе кĕме хăтланчĕ, анчах унăн капла та ĕç тухмарĕ теме пулать. Противник салтаксем тĕлĕшпе те, боевой техника тĕлĕшпе те пысăк çухатусем тӳсет.

Фашистсем вĕсене хирĕç тăрса, чарса пыракан чăссене хупăрласа илеспĕн пĕрре кăна мар хăтланса пăхрĕç, анчах вĕсен ним те тухмарĕ. Пирĕн войскăсем флангри атакăсене паттăрăн сире-сире ярааççĕ, тыла кĕрсе кайма хăтланакан тăшмана вăйлăн çапса ывăтса ярааççĕ. Тăшмана хирĕç тăрса чарса пыракан чăссем çĕнĕ позицисем çине организованнăн, ним паникăсăр куçса пычĕç. Фашистсене пирĕн территорин кашни километрĕ пит хаклă ларать, малалла пуснă пĕр утăм çĕршĕн те вĕсен тем чухлĕ çар пĕтет.

Фашистсене пирĕн авиаци пысăк çухатусем кӳрет. Агафонов капитан пĕр çапăçурах тăшманăн тăватă самолетне пĕтерчĕ: икĕ бомбардировщик, икĕ истребитель. Н-ски часть пĕрре вĕссе кайсах тăшман пехоти ларса пыракан 56 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр авиачасть, Колосов юлташ чăсĕ йышăнса тăракан районра вăрçаканскер, пĕр кун хушшинчех 300 салтак ытла пĕтерсе тăкрĕ.

Мелитополь енче положени халь те малтанхи пекех пит те йывăр. Азов тинĕсĕ таврашăнчи промышленность центрĕсенчен чылайăшне противник тӳрремĕнех хăратса тăрать.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă туммипсем

Тăван Хĕрлĕ Çара—тăванла пулăшу

Аначкассинчи «Коммунист» колхоз членĕсем, Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйпа пулăшса тăма чĕнсе, Ишлей районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем патне уçă çыру çыртĕç. «Коммунист» колхоз членĕсем чĕнсе каланине районри ĕççыннисем ырă кăмăлпа йышăнса илчĕç: октябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне районра Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 12 мăшăр çăматă, 1224 килограмм çăм, 2657 тир, 2113 метр пир, 26 ăшă кĕпе, 51 мăшăр алшăш, 285 алшăлли, 66 мăшăр чăлха, 101 çĕлĕк, 10 фуфайка, 68 аялтан тăхăнмалли кĕпе тата ытти тĕрлĕ нумай япаласем пухнă. Пĕтĕмпе çак ĕçе колхозсенче 4500 кил ытла хутшăннă.

Пухăнă япаласенчен чылайăшне, сăмахран, 2033 метр пир, 70 çĕлĕк, 276 алшăлли, 62 кĕпе, 43 мăшăр алшăш, 27 мăшăр чăлха, 10 фуфайка—пĕтĕмпе 1438 ăшă япала çар склачĕсене ăсатнă.

Çав вăхăтрах 2572 тир мастерскойсене тата 1138 килограмм çăм тĕрлĕ армансене таптарма панă. Чылай колхозсенче алшăшсем, чăлхасем сыхаççĕ.

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе районри чылай колхозсем кăтартуллăн ĕçлерĕç. Уйрăмах «Осоавиахим», «Париж Коммуни», «Хĕрлĕ танк» тата ытти колхозсене палла тумалла. «Осоавиахим» колхоз членĕсем кашни килрен пĕрер тир тата пĕрер килограма яхăн çăм панă. «Париж коммуни» колхоз членĕсем 66 тир, 23 килограмм çăм, 100 метр пир пухса панă. Çав колхозри А. Федоровăпа М. Ефрейторова колхозницăсем (вĕсен ывăлĕсемпе упăшкисем фронтра çапăçаççĕ) 400—1000 грамшар çăм, пĕрер тир тата пĕрер мăшăр пир тăла панă.

«Хĕрлĕ танк» колхоз членĕсем кашни килрен пекех пĕрер тир, кунсăр пуçне тата 41,6 килограмм çăм, 57 метр пир панă. Ăшă тумтирсем парас ĕçе хутшăнман кил ку колхозра çукпа пĕрех.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 40 килограмм çăм, 41 тир панă.

Папанин ячĕпе тăракан колхоз членĕн М. Моисеевăн упăшки, шăллĕ тата кĕрӳшĕ фронтра çапăçаççĕ. Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас ыйтăва сӳтсе-явма пухăннă пухура М. Моисеева юлташ çапла каланă:

— Манăн упăшка, шăллăм тата кĕрӳ фронтра тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Эпĕ кашнин ячĕпе пĕрер ăшă япала: пĕр гир, пĕр мăшăр алшăш, тепĕр мăшăр чăлха паратăп,—тенĕ.

Паллах ĕнтĕ, Моисеева пек патриоткăсем районра сахал мар, вĕсем çĕршерĕн, пиншерĕн шутланаççĕ.

Мĕнле ертсе пырать-ха çак ĕçе ВКП(б) райкомĕ? Мĕн-мĕн тунă-ха эпир совет патриочĕсем пуçарса янă çак хăватлă движени чăн та анлă çулпа сарăлса пытăр тесе?

Чи малтан пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе агитколлектив руководителĕсен канашлăвне туса иртернĕ. Ку канашлура ăшă тумтирсем пухас ыйтупа сыхăннă массăллă тата практикăллă ĕçсем çинчен сӳтсе-явнă. Кун хыççăн ялсовет исполкомĕсен председателĕсемпе колхоз председателĕсен канашлăвне иртернĕ. Унта ăшă тумтирсем пухас ыйтупа сыхăннă практикăллă ĕçсем çинчен сӳтсе-явнипе пĕрлех, «Халăхсен фашизма хирĕç пыракан кĕрешӳри пĕрлĕх фрончĕ» ятлă темăпа доклад туса панă. Çак ыйтупах тата учительсен, комсомол активĕн, райцентрти учрежденисемпе предприятисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисен пухăвĕсене туса иртернĕ. Кусемсĕр пуçне кашни колхозрах колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕсене иртернĕ. Пухусенче, «Коммунист» колхоз членĕсем чĕнсе каланине сӳтсе-явнипе пĕрлех, «Совет халăхĕн фрончĕне тылĕ» ятлă темăпа 114 доклад туса панă. Докладчиксем пулма районри тата ялти актива анлăн явăçтарнă.

Анчах та ăшă япаласем пухас тĕлĕшпе пирĕн туса çитереймен ĕçсем те пур-ха. Хăшпĕр колхозсемпе колективсенче пысăк çитменлĕхсем пур. Пуринчен ытла ку тĕлĕшпе «Правда», «Красноармеец», «Красный борец», «Маяк» колхозсенче ĕç сӳрĕкĕн пырать. «Правда» колхозра ăшă тумтирсем пухас ĕçе пĕтĕмпе те 41 кил кăна хутшăннă. «Красноармеец» колхозра—28 кил хутшăннă.

Мăн Янăш ялсоветне кĕрекен колхозсене илес пулсан, кунте вара ĕç тата начартарасси пырать.

Çак сӳлте асăннă ялсоветсемпе колхозсен председателĕсем, çав колхозсенчи коммунистсемпе комсомолецсем, агитколлективсемпе вĕсен руководителĕсем ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларнă, ăшă тумтирсем пухасси государствăн питех те кирлĕ тата пысăк ĕçĕ пулса тăнине тивĕçлипе ăнланман, хăйсен ĕçне пухусем туса иртернипех вĕçлеме пăхнă. Анаткас Марковăри агитколлектив руководителĕ И. Васильев юлташ пухусем туса колхозниксене ăнлантарса парас ĕçе те кирлĕ пек организацилемен пулнă. Тивĕшпи агитколлективпа унăн руководителĕ В. Яргеев юлташ çинчен те çавнах калас пулать. Ку коллективра агитаторсем хăйсем пример кăтартни курăнмасть-ха.

Районри учительсем хушшинче те ку тĕлĕшпе ĕç çителĕксĕр пырать. Сăмахран, Тивĕш шкулĕнчи 11 учительтен çак ĕçе халиччен мĕнпурĕ те 2 учитель кăна хутшăннă пулнă. Ăшă япаласем парас тĕлĕшпе райсутĕç пайĕнче ĕçлекенсемпе Ишлейри сельпо работникĕсем те юлса пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çара валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе пирĕн опытсем çук мар, пур. Пирĕн задача халĕ—çав опытсемпе усă курса, ăшă япаласем пухас ĕçри çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтересси тата вăл ĕçе районри халăха пĕтĕмпех явăçтарасси пулса тăрать.

Ф. САЗОНОВ.

ВКП(б) Ишлей райкомĕн секретарĕ.

Актив хăй çителĕксĕр хутшăннă çĕрте

ИЕПРЕÇ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса парас тĕлĕшпе вăрмантромсоюз, чугунçул станци, лесхоз тата Димитров, Карл Маркс ячĕсемпе тăракан, «Тымар», «Красная Нива», «Молния», «МОПР», «Социализм» колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Çак асăннă организацисемпе колхозсенче ăшă тумтирсем пухас ĕçе пурне те явăçтарнă. «Тымар» колхоз членĕсем пурĕ 106 çын ăшă япаласем панă. Паянхи куна вĕсем 28 тир, 38 килограмм çăм т. ыт. япаласем пухнă.

Халăх хăйĕн Хĕрлĕ Çарне юратать, унăн тăрăшать, ăна пулăшать. Больницăра ĕçлекен врач Михаил Селецкий юлташ боецсем валли икĕ мăшăр çăматă, икĕ килограмм çăм, 3,5 метр сукно, поселокри килхуçи хĕрарăмĕ Евдокия Мохова 2 тир, пĕр мăшăр ăшă носки, пĕр мăшăр алшăш, пĕр ăшă кĕпе, Крахмал завочĕн директорĕ В. Казаков юлташ 3 тир, алшăлли тата минтер пичĕ панă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе чылай учрежденисенче, предприятисенче тата колхозсенче аван организацилеменĕ пулсан та, хăшпĕр çĕрте ку ĕç начар пырать. Партипе комсомолăн, советпа профсоюзăн хăшпĕр организацийĕсем çак ответлă та политикăллă пысăк ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ, халăхăн пуçарăвне организацилемеççĕ, вĕсем ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шаннă.

Райсовет исполкомĕнче ĕçлекенсем хăйсем те ку ĕçе начар хутшăнаççĕ. Пуçламăш парторганизацин секретарĕ Ф. Муратов юлташ начар ĕçленине татса унти актив хăй çак ĕçрен пăрăнса тăнине пуле, исполкомра тата унăн отделĕсенче ĕçлекен 50—60 çыран ăшă япаласем 25 çын кăна панă. Райçутĕç пайĕн заведующийĕ Егоров, райсовет исполкомĕн секретарĕ М. Леонтьев юлташсем ку тарана çитсе те ăшă япаласенчен нимĕн те паман. Райсовет исполкомĕн председателĕ А. Константинов юлташ çак ĕç исполком работникĕсем хушшинче мĕнле пыниче сахал интересленнĕ.

Райсовет исполкомĕ, çавăн пекех парти райкомĕ те, çителĕксĕр ертсе пынă пирки хăшпĕр учрежденисенче, предприятисенче, ялсоветсенче тата колхоз правленийĕсенче ĕçлекенсем ăшă тумтирсем пухас ĕçе хутшăнман. «Красный урожай», «Çĕнĕ пурнăç», «Осоавиахим», «Путиловка», «17-й партсъезд» колхозсенче ку ĕçе тытăнманпа пĕрех. «Путиловка» колхоз председателĕ коммунист А. Еремов юлташ хăй те нимĕн те паман. Çавăн пекех, «Красный фронтовик», «Красный водник» колхозсем те юлса пыраççĕ.

Çĕнĕ Чураш ялсоветĕ (председателĕ С. Еремеев) ăшă тумтирсем пухас ĕçе юлашки вăхăтра йăлтах начарлатнă. Ялти актива ĕçе явăçтарман, ялсоветĕ пĕтĕм ĕçе комисси çине хунă.

Партипе комсомол, совет тата профсоюз организацийĕсем вырăнти комиссисене конкретлă пулăшу парса пымалла. Халăх хушшинче массăллă-анлантарулла ĕçе анлăн туса пырса, ăшă тумтирсем пухас ĕçе ăнăçлăн вĕçлемелле.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Ăшă тумтирсем тума

ОКТЯБРЬСКОЕ. Октябрĕн 11-мĕш. (Телефонпа). Октябрĕн 10-мĕш тĕлне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем çĕлеме районри комисси 2075 тир тума панă, 845 килограмм çăм çăматă йăвалама панă. Кунсăр пуçне 287 мăшăр алшăшсемпе перчаткăсем, 136 мăшăр çăм носки, 120 мулаххай, 32 мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм, 5 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 10 ватăкăна çĕленĕ фуфайка, 281 алшăлли тата ытти вак япаласем те панă.

Районра уйрăм работниксем ку ĕçе активлăн хутшăнса лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Районри следователь Ермолаев юлташ 5 тир, 1 мулаххай пачĕ. Прокурор помощникĕ Кудряшов юлташ 1 мăшăр çăматă, 2 тир, Эльменкасси колхоз председателĕ Кузнецова Ольга 7 тир, 1 мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм, 1 мăшăр носки, 1 мăшăр чăлха пачĕ. Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсем парса пулăшас ĕçре çавнашкал лайăх тĕслĕхсем сахал мар. Ку ĕçе колхозниксем куллен сарса пыраççĕ.

И. ДОЛГОВ.

ВКП(б) Райкомĕн секретарĕ.

Вăрман ĕçĕнчи стахановецсем

Милютинри вăрманпунктĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕ Октябрьти революци 24 çул тултарнă уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва тухса, хăйсем çине IV-мĕш квартала вăрман хатĕрлессине планран иртерсе тата срокчен тултарма обязательство илнĕ. Халĕ ĕнтĕ çав обязательствăна пурнăçлама пуçланă. Ĕç нормине ытлашшипех тултаракан стахановецсен шучĕ кашни кун ӳссе пырать. Рабочисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашни рабочи хăй çине илнĕ обязательствăна ытлашшипех пурнăçлама тăрăшса ĕçлет. Акă, стахановец Гусан Самсудинов юлташ, вăл кунта кадровăй рабочи шутланать, темиçе çул хушши ĕнтĕ вăрманта ĕçлет. Вăл вăрман ĕçне лайăх вĕренсе çитнĕ. План тăрăх сменăра 281 кубла метр касса хатĕрлемелле пулсан, вăл 483 кубла метр касса хатĕрлет. Пубарекин юлташăн норма тăрăх 342 кубла метр хатĕрлемелле пулсан, вăл 598 кубла метр туса пырать. Кузин юлташăн бригадинче кашни çын пуçне 175 кубла метр хатĕрлемелле, вĕсем кашни кунах 275—300 кубла метр хатĕрлесе пыраççĕ. Черепанов юлташăн бригади те ĕç нормине 150—175 процент тултарса пырать. Çавăн пекех тата ытти юлташсем те вăрман хатĕрленĕ çĕрте ĕç нормине ытлашшипех тултарса, кăтартуллăн ĕçлеççĕ.

Вăрмана хатĕрлессипе пĕрлех турттарасси те йĕркеллĕ пырать. Кунта та стахановла ĕçлекенсем нумай. Шофер Мартынов юлташăн хăйĕн машинине куллен 480 кубла метр вăрман турттарса кăлармалла пулсан, вăл кашни кунах 615—620 кубла метр турттарса кăларать. Вăл хăйĕн машинине пĕр минута та ахаль тăратмасть. Вак ремонт тумалла пулсан, грузчиксем вăрман тиенĕ вăхăтрах юсаса хурать. Пысăк ремонт кирлĕ пулсан, çĕр сывăрмасăр юсать.

Çавăн пекех, шофер Степанов юлташ та вăрман турттармалли нормăна 130—140 процент тултарса пырать. Кашни уйăхрах 400—500 килограмм горючи перекетлесе хăварать. Вăрман пунктĕнчи пур рабочисем хушшинче те тăваттăмĕш квартал планне ытлашшипех тултарассишĕн ăмăрту сарăлса пырать.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Государствăна сӳс параççĕ

Канаш районĕнчи колхозсенче пучахлă тата шăрçа йышши культурăсемпе пĕрлех технически культурăсем те питĕ ăнса пулчĕç. Катекри Киров ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулхине гектартан 10 центнер кантăр вăрри, 8 центнер кантăр сӳсĕ туса илнĕ пуслан, кăçалхи тухăçлăх татах та пысăкрах. Колхозниксем ăнса пулнă кантăра пысăк ăнăçлăхпа татса пуçтарчĕç тата кантăра çапса шыва хутма тытăнчĕç.

Халĕ пур колхозсенче те технически культурăсене çапса типтерлес ĕç пырать. Ĕçе лайăх организацилеме колхозсенче ку ĕçе ăнăçлăн вĕçлесе пыраççĕ. Аччари «Хĕрлĕ Çар», Турикас Уçырмари «Ударник» колхозсем кантăр çурăмĕсене шыва хутнă та ĕнтĕ.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах колхозсем государствăна сӳс тата кантăр вăрри пама пуçланă. 1941 çулăн государствăна сӳс тăратассине Маякри «Сĕнĕ пурнăç» колхоз 109 процент, «Молния» колхоз 105 процент, «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз 94,7 процент, Доронин ячĕпе тăракан колхоз 74,4 процент тултарнă. «Хĕрлĕ хĕм» колхоз государствăна 161 килограмм кантăр вăрри, 285 килограмм кантăр сӳсĕ леçсе панă.

И. МАЛОВ.

Хастарлă ĕçлеççĕ

СĔНТĔР. Шатракасси ялсоветĕнчи «Наука» колхоз колхозникĕсем кăçал нихăçанхинчен те хастарлă ĕçлеççĕ. Тырă вырнă çĕре пур колхозниксем те, çамрăк ачасем те активлăн хутшăнчĕç. Уйри тырпула кĕске срокра тата пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕчĕç. Часах турттарса çапма тытăнчĕç. Сентябрĕн 22-мĕш тĕлне колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Абросеев, Кошкин машиноведсем, П. Сапожникова тата ытти колхозниксем тăрăшса ĕçлерĕç. Ватă колхозницăсем Львова Ксения тата Лаптева Агафия кашни кунах ĕçе хутшăнчĕç.

Халĕ колхоз клевер пуçтарса кĕрес, кĕрхи çĕртме тăвас тата силос хывас тĕлĕшпе ĕçлет, государствăна тырă парса татассишĕн тăрăшать.

Хачăк ялсоветĕнчи «1905 г.», «Красное знамя» колхозсенче те ĕç хĕрӳллĕ пырать. Ку колхозсем çĕрулми кăларса пĕтернĕ. Халĕ авăн çапаççĕ.

В-ва.

Хĕлле валли — пахча-çимĕçсем

ÇĔРПУ. Кăçал колхозсен уйăрсенче ялхуçалăх продукчĕсем вăйлă пулчĕç. Çак продуктсене пĕр пăсмасăр хĕл кăçарас пулать. Районри потребсоюз хĕлле валли пахча-çимĕçсем нумай хатĕрлерĕ. Хатĕрленĕ çимĕçсенчен 24,5 тонна хăяр, 7 тонна помидор, 3,3 тонна купăста тăварласа лартрĕ.

Хĕлле валли пахча-çимĕçсем хатĕрлесе хурас тĕлĕшпе уйрăмăнах Рындинări тата Янсакассинчи сельпосем лайăх ĕçлеççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Ленинград çыннисем фронта пулăшаççĕ. **Укерчĕк çинче:** Н-ски заводри хатĕр продукцин чи лайăх контролерĕ комсомолка Н. К. Николаева снарядсен хатĕр стаканĕсене тĕрĕслет.

А. Михайлов фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

В. Медведев

Тусăм, маншăн та ĕçле!

Каç хĕвелĕ лăпкăн анчĕ
Хĕретсе пĕлĕтсене.
Яштак пӳллĕ çамрăк каччă
Пычĕ хăй савни патне.

Икĕ савнă чун тĕлпулнă
Вырăнта, ял хыçĕнче,
Йывăç витĕр шăппăн шунă
Çил сасси çеç илтĕнчĕ.

Çăлтăрсем йăл-ял çунаççĕ
Тĕпсĕр тăрă тӳпере,
Хĕрĕнсе пĕр пек тапаççĕ
Пĕр пек савнă ик чĕре.

Ирхине ăсанĕ каччă
Çакă ешĕл урампа,
Хĕрĕ юлĕ, анчах таччăн
Çӳрĕ юрату унпа.

Шурăмпуç йăр-яр шуралчĕ,
Аслă уй кăвакарать.
Уйăрлас чухне яш каччă
Савнине çапла калать:

«Хам яла чунран ырлатăп,
Юрататăп колхоза,
Сеп-сенкер хире пăхатăп
Ăшă кăмăлран савса.

Ик ута кӳлсе халь манăн
Тухмаллаччĕ улăха.
Çук, анчах вăрçа каймашкăн
Чĕнчĕ хамăн халăхăм.

Кĕркуннен сап-сарă тумĕ
Çаралсассăн, аслă уй
Тыррисен хăвачĕ умĕн
Пулмаллаччĕ пирĕн туй.

Туй тума памарĕ Гитлер,—
Вилĕ çитĕр ун пуçне,—
Хĕрхенмесĕр, шеллемесĕр
Ирĕпĕр тăшмансене.

Эп паян тухса каятăп
Хĕвелпе пĕрле ирех,
Тантăш-туссемпе васкатăп
Аслă вăрçăри хире.

Хăвăншăн çеç мар, чиперĕм,
Тусăм, маншăн та ĕçле!
Йĕрĕнчĕк фашист тискерĕ
Пĕтмелле те вилмелле.

Ун чухне тин эпĕ килĕп
Аслă вăрçă хирĕнчен,
Чаплăн тăрăп тăван килĕм,
Тăван ялăм умĕнче.

Ун чухне вăрман кумханĕ,
Шавлă вĕçсĕр-хĕрсĕр уй,
Пĕтĕм ялĕпе пуçланĕ
Пирĕн чаплă пысăк туй.

Тусăм, шурăмпуç кăвакăн
Сарăлса килет. Сыв юл!»

* * *

Уйрăлса каяççĕ акă.
Икĕ çыннăн икĕ çул.

Вăрçалла каять пĕр çулĕ,
Хирелле тухать тепри.
Вăхăт çитĕ (те тĕплулĕç
Иккĕш те пĕрне-пĕри.

Вырăсларан Я. УХСАЙ куçарнă.

Завод хĕле хатĕрленет

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). «Большевик» заводра хĕле хатĕрленес ĕç куллен сарăлса пырать. Ку тĕлĕшпе кашни цехра, тĕп производствăра тата хваттерсенче конкретлă ĕçсем туса ирттереççĕ.

Çитес кунсенче пур цехсенче те чӳрече кантăкĕсене лартса тухаççĕ. Ку тĕлĕшпе ятарласах икĕ çын ĕçлеçĕ. Пăс тăракан трубасене те юсаççĕ.

Кăçал завод дирекцийĕ рубильнăй, выпарнăй, диффузионнăй цехсемпе машиннăй отделени çийĕсене витме палăртнă. Ку ĕçе пурнăçлас тĕлĕшпе жестянщиксем пысăк тимлĕхпе ĕçлеçĕ.

Поселокри çурт-йĕрсене ремонт тăвас енĕпе 3 группа тунă. Пĕрисем кантăк лартаççĕ, теприсем—кăмакасем, плитасем юсаççĕ, никĕс тавра тăпра купалаççĕ т. ыт. те. Юлашки вăхăтра 1, 2, 5 тата 6-мĕш номерлĕ çуртсене юсанă. Вĕсем пурте халь хĕле хатĕр.

Семьесĕр çынсем пурăнакан общежитисенче те ремонт ĕçĕ вĕçленчĕ. 8-мĕш номерлĕ общежитире пур пӳлĕмсене те шуратса тасатнă, çĕмрĕк кăмакасене юсанă, чӳрече кантăкĕсене лартнă. Çак кунсенче тата çурт йĕри-тавра тăпра сапса тухрĕç.

Пӳлĕмсем таса та çутă. Кашни пӳлĕмрех радио, чечексем. Выртса тăмалли хатĕрсем те пурин те çителĕклĕ.

Кăçал вутă складĕнче ĕçлекенсен общежитине сивĕ кунсем пуçланиччен ес юсаса пĕтерчĕç. Кунта рабочисене пушă вăхăта канăçлăн иртерме пур условисем те туса панă. Апат-çимĕç пĕçерме, шыв тыткалама хатĕрсем çителĕклĕ, яланах вĕри шыв пур.

Иртнĕ çулсенче хăшпĕр рабочисем хваттер çитмен пирки частнăй çынсем патĕнче пурăннă. Кăçал ун пеккисем çукпа пĕрех. Тĕп производствăра тата цехсенче ĕçлекенсем пурте завод çурчĕсенче пурăнаççĕ.

Завод дирекцийĕпе пуçламĕш парторганизаци хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе уйрăмăнах Хĕрлĕ Çара кайнă рабочисен çемьисене пысăк пулăшу параççĕ. Кашни çемьенех лайăх хваттерсене вырнаçтарнă, хăшпĕрисене выльăхчĕрлĕх усрама, вут-шанкă хума сарайсем туса параççĕ, ĕçе кĕме пулăшаççĕ. Иӳнĕ хакпа вут-шанкă парса, ăна укçасăрах завод лашисемпе турттарса парассине организацилеме.

Юлашки вăхăтра рабочисен клубне тата ачасен яслине юсама тытăннă. Яслĕре кантăксене лартнă та ĕнтĕ, 100 кубла метр вутă турттарса хатĕрленĕ.

Хар. ЛИСИН.

Ĕçри пысăк пахалăхшăн

Çĕмĕрлери чугунçул станцин коллективĕ отечественнăй вăрçă кунĕсенче чугунçул транспортне отлично ĕçлеттерсе, тăван Хĕрлĕ Çара пулăшас шухăш-кăмăлпа пурăнать. Кашни работник хăйĕн вырăнĕнче мĕнле те пулсан лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшать. Мĕншĕн тесен, вăл чугунçул транспортне отлично ĕçлеттересси чугунçул работникĕн чи хисеплĕ обязанноçĕ пулса тăнине лайăх пĕлет.

Пирĕн станци халь пĕр браксăр, простой тумасăр ĕçлет. Эпир поездсене хăвăртрах, пĕр чарăнусăр çӳретессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр. Ку тĕлĕшпе уйрăм работниксем хăйсен ĕçне пĕтĕмпех отлично туса пыраççĕ. Сăмахран, паллă стахановец-кривоносовецсем И. Зубавин, А. Бежаев, С. Потапов юлташсем поездсене ялан вăхăтра ăсатаççĕ, вĕсем пĕр минута та простой туман. Составительсем М. Брюхановпа В. Подуздиков юлташсем те браксăр ĕçлеççĕ, вĕсем хăвăрт ĕçлесе пĕтĕм коллектива пример кăтартаççĕ.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче стрелочниксем А. Смирновăпа И. Бочков юлташсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем стрелка хуçалăхне çирĕп, тирпейлĕ тытса тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра эпир хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе ытларах ĕçлеме тытăнтăмăр. Мĕн кирлине пурне те халех хатĕрлетпĕр, чугунçул транспортне отлично ĕçлеме пур условисем те тăватпăр. Транспорт хĕллехи вăхăтра та пĕр чăрмавсăр ĕçлетĕр!—Çакăн пек лозунг пирĕн.

Нумаях та пулмасть, станци начальникĕ Селезнев юлташ пуçарнипе товарнăй конторăна ремонт турĕç. Ку ĕçе пĕтĕмпех вырăнти работниксен вăйĕпе тунă. Кунсăр пуçне тата Н. Филиппова ертсе пынипе килхуçи хĕрарăмсем пассажирски поездсене вĕретнĕ шыв тăратассине организацилерĕç.

Чугунçул транспорчĕ—тăван Хĕрлĕ Çар помощникĕ. Пирĕн коллектив ăна яланах асра тытать. Эпир Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те туса парса, ăна куллен пулăшса тăма хатĕр.

С. ШАПКОВ.

Çĕмĕрлери чугунçул станцинчи пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

Çар ĕçне вĕренекенсене пулăшма

ШТЫКПА ÇАПĂÇАССИ

Вырăссен аслă полководецĕ А. В. Суворов ютçĕршывсенчен килсе кĕнĕ тăшмансене хирĕç çапăçнă чухне пемелли хĕçпăшалпа усă курнипе пĕрлех, штыкпа та анлăн тата пĕлсе усă курнă. Суворов çапла вĕрентнĕ: «Стреляйсем, малалла, тăшмана чиксе пăрахăр, персе вĕлерĕр, тыткăна илĕр!»

Ирĕклĕ халăхăн аллинчи штык хаяр та хĕрхенӳсĕр. Вырăс штыкĕн мĕнпур вăйăпе хăватне гитлерла бандитсен шайкисем хăйсен тирĕсем çинче тӳсе курчĕç ĕнтĕ. Противникăн танкĕсем те, инçетрен перекен орудийĕсем те, самолечĕсем те паттăр хĕрлĕ воинсен çиçĕмлĕ атакине тытса чарма пултараймаççĕ.

«Атака тăвасси тата противника штыксемпе пыра-пыра çапса пĕтерсе тăкасси,—тесе çырнă «Хĕрлĕ Çара штыкпа çапăçма вĕрентсе хатĕрлемелли руководствăра»,—çапăçури татăклă тапхăр пулса тăрать». Çапăçура,—тесе вĕрентет çав руководство,—сывăхри тăшман çине хăюллăн та çиçĕм пек тапăнса пыр, тăшмана персе вĕлер, пеме май килмесен,—штыкпа чиксе пăрах.

Чикмелли хĕçпăшала тренировка туса тыткалама хăнăхса çитнĕ боец аллинчи штык хаяр та хăрушă хĕçпăшал пулса тăрать. Винтовкăна тыткалама, тăшмана штыкпа чиксе тата прикладпа çапса пăрахма Хĕрлĕ Çар боецĕн кăна мар, пирĕн тăван çĕршыври кашни патриотăн лайăх вĕренсе çитмелле.

Малалла эпир алла винтовка тытса çапăçмалли тĕп майсене кăтартса паратпăр.

Çапăçăва тухма хатĕрленесси (1-мĕш ӳкерчĕк)—вăл противника штыкпа чикме, прикладпа çапса пăрахма тата противник хăй чиксе амантассине пăрса яма кирлĕ майсенчен чи лайăхрахи пулса тăрать. Çапăçăва тухма штыклă хĕçпăшала пĕр вырăнта тăнă чухне те, çавăн пекех утса пынă чухне те хатĕрлесе хума пулать.

Штыкпа çапăçăва тухма хатĕрленессине вырăнта тăнă чухне çакăн пек туса ирттермелле. Боец сылтăм еннелле хăяккăн çавăрăнса тăрса, сулахай урине пĕр утăм малалла ярса пусать, унăн икĕ ури те чĕркуççи тĕлĕнчен кăштах авăнса тăраççĕ, сулахай чĕркуççи ура лаппин вăта çĕрне тĕл килет, сылтăм чĕркуççи—кăшт пăрăнса тăнă сылтăм ура лаппин вĕçне тĕл килет; çаксене тунипе пĕрлех, винтовкăна сылтăм алăпа сулăмлăн малалла кăнтарса ярса, сулахай аллаппи çине хумалла, штык вĕçĕ сулахай куç еннерех сулăнса, мăй çӳллĕшĕнче тăмалла. Сулахай алăпа—винтовкăна прицелран çӳлерех (аялти ложевой ункă тĕлĕнчен), сылтăм алăпа—прикулад шейкинчен тытмалла.

Винтовкăн магазинĕ аял еннелле пулать, икĕ алă та винтовкăна çирĕппĕн тытса тăраççĕ, сылтăм алă прикулада сылтăм пĕç кăкĕ çумне таччăн çыпçăктарса тăрать. Çын ӳт-пĕвĕн йывăрăшĕ икĕ ура çине те пĕр пекех лекет. Боецăн хăй кĕлеткине тӳррĕн тытмалла, куçсемпе противник çине пăхса, унăн кашни хусканăвне сăнаса, асăрхаса пымалла. Опытлă тăшман яланах хăй малтан пырса тапăнма тăрăшать,—çавăнпа та унăн хĕçпăшалне çапса ӳкерме яланах хатĕр пулмалла.

Утса е чупса пынă чухне штыкпа çапăçăва тухма, утас е чупас хăвăртлăха чакармасăрах, сулахай урапа пуснă май хатĕрленеççĕ. Винтовкăна сылтăм алăпа сулăмлăн малалла кăнтарса ярса, сӳлте кăтартнă пекех икĕ алăпа та хыттăн чăмăртаса тытаççĕ, кунта вара сылтăм алла сылтăм пĕçкăкĕнчен кăшт маларах ямалла.

Вĕрентнĕ чухне çак икĕ приема та «к бою готовьсь!» командăпа туса ирттереççĕ. Çак командăпа тунă положенирен малтанхи вырăнах тӳрленсе тăма «к ноге!» команда параççĕ. Кун пек чухне вара винтовкăна сылтăм алăпа тытса, приклад сылтăм ура тĕлне пулмалла тӳрлетсе тăратаççĕ.

Штыкпа чикесси. Противник хăвăнтан мĕн чухлĕ сывăхра е аякра пулнине шута илсе. Ăна «сывăхран», «вăтамран» тата «аяккарахран» чикмелли майсемпе усă курмалла. Тăшмана кирек мĕнле вырăнтан та, хăвăрт та витĕмлĕн пырса чикме вĕренмелле.

Тăшман питĕ çывăхра чухне ăна сывăхран чиксе пăрахмалли майпа, кĕлеткепе малалла ӳпĕнмесĕр, вырăнта тӳрĕ тăнă çĕртенех чиксе пăрахма пулать. Çакăн пек чикесси вăл тăвăртарах вырăнсенче: вăрманта, окопра, коридорта т. ыт. çавăн пек çĕрте пулма пултарать. Ку приема çапла тăваççĕ: «к бою!» тесе команда панă хыççăнхи положенирен винтовкăна кăшт каялларах туртса илмелле те, штыкпа противника тĕллесе, винтовкăна алăсемпе вăйлăн малалла ярса, противника хăвăрттăн чиксе пăрахмалла. Çакăн пек чикессине «коротким коли!» командăпа тăваççĕ (2-мĕш ӳкерчĕк).

Вăтам дистанцирен штыкпа чикесси (вырăсла ăна средний е основной укол теççĕ) противник боецран 2—3 метрта чухне пулма пултарать. Ку приема çапла тăваççĕ: «к бою» командăпа хатĕрленсе тăнă положенирен сулахай урана малалла ярса пусмалла та, пĕтĕм кĕлеткепе малалла туртăнса, винтовкăна сулахай алă тӳрĕ пуличченех малалла кăнтарса ямалла. Вĕрентнĕ чухне çакăн пек чикессине «средним коли!» командăпа тăваççĕ (3-мĕш ӳкерчĕк).

Çывăхран е вăтам дистанцирен чикме май çук чухне противника аяккарахран пырса чикмелли меслетпе усă кураççĕ. Кун пек чух «к бою» командăпа хатĕрленсе тăнă положенирен сулахай урана малалла ярса пусмалла та пĕтĕм кĕлеткепе малалла туртăнмалла. Винтовкăна сулахай алă тӳрĕ пуличчен, сылтăм алă магазина пырса лекиччен малалла кăнтарса ямалла. Çакăн пек чикессине «длинным коли!» командăпа тăваççĕ.

Боец çак майсемпе чикме вĕренсе çитсен, противника хирĕç, дистанцие кура, ответлă атакăсем тăвассине вĕренме тытăнмалла. Ответлă атака тунă чухне противник аллинчи хĕçпăшала винтовка кĕпçийĕпе сирсе ярасçĕ е çапса ывăтаççĕ.

Противник хĕçпăшалне хăвăрттăн та хыттăн, ытлашши хускануçсем тумасăр сирсе яма вĕренмелле. Çакна тума вĕрентнĕ чухне, чи малтан, противник хĕçпăшалне сылтăмалла сирсе ярать, унтан—сулахаялла, çӳлтен сулахаялла, юлашкинчен чи йывăррине туна—çӳлтен сылтăмалла сирсе яма вĕрентмелле.

Противник боец кăкăрне сылтăм еннен пырса чикме тăрсан, противникăн штыкне сылтăмалла сирсе ярасçĕ. Противникăн хĕçпăшалне сылтăмалла сирсе янă чухне сулахай алăпа винтовкăна хăвăрттăн сылтăмалла та кăшт малалла сулса, противникăн хĕçпăшалне винтовка вуллипе хыттăн çапмалла. Çапла сирсе янă хыççăн противнике çийĕнчех чикме тăрăшмалла. Вĕреннĕ чухне çак приема «вправо отбей!» командăпа тăваççĕ. Чăн-чăн çапăçура, паллах, ун пек команда панине кĕтсе тăма çук.

Противник боец кăкăрне сулахай енчен пырса чикме тăрсан, противникăн штыкне сулахаялла сирсе ярасçĕ (4-мĕш ӳкерчĕк). Противникăн хĕçпăшалне сулахаялла тата кăшт маларах сулса, ăна винтовка вуллипе хыттăн сулахаялла çапмалла, кун хыççăн противника çийĕнчех чикмелле е прикладпа çапмалла.

Противник боеца хырăмран чикме тăрсан, противникăн штыкне çӳлтен сылтăмалла сирсе ярасçĕ. Çӳлтен сылтăмалла сирсе янă чухне сулахай алăпа винтовкăна хăвăрттăн хуннелле туртса илсе, штык вĕçĕпе сывлăшра сулахайран сылтăмалла «С» саспалли майлăрах движени туса илмелле те винтовка вуллипе противник хĕçпăшалне хыттăн çапмалла. Противник штыкне çӳлтен сылтăмалла сирсе ярсан, противника çийĕнчех чиксе пăрахмалла. Вĕреннĕ чухне çак приема «вниз направо—отбей!» командăпа тăваççĕ.

Противникăн штыкне сулахаялла сирсе ярсан, штыкпа чикме мĕншĕн те пулин майлă мар пулсан, противника аякран прикладпа пырса çапаççĕ (5-мĕш ӳкерчĕк). Винтовка тытнă сылтăм алăпа хыттăн тĕртсе, противник хĕçпăшалне аялтан çӳлелле — сулахаялла сирсе ярса, çав вăхăтрах пĕтĕм кĕлеткепе сулахаялла сулăмлăн çаврăнса, винтовкăна сулахай алăпа хăваласа еннелле туртса илмелле те противника прикладăн çивчĕ кĕтессипе пуçран çапмалла. Çапнă чухне сылтăм урана малалла ярса сулахай еннелле тăпанарах пусаççĕ, ӳт-пӳ йывăрлăхĕ вара сулахай ура çине лекет, сылтăм алă часах тĕлĕнче хутланса тӳрĕ кĕтес пулса тăрать. Çакăн пек çапассине «с боку прикладом—бей!» командăпа тăваççĕ.

Прикладпа çӳлтен пырса çапнă чухне винтовкăна, прикладне çӳлелле туса, каялла туртса илмелле те, пăшал вуллинчен икĕ алăпа та çирĕппĕн тытса, прикладăн çивчĕ кĕтессипе противника çӳлтен—пуç лĕпкинчен е аякран—тăнлавран пырса çапмалла. Вĕрентнĕ чухне çак приема «с верху прикладом—бей!» командăпа тăваççĕ.

Кунсăр пуçне, винтовка тытса çапăçнă чухне касакан штыкпа противника питрен е майран касма пулать. Ку енĕпе «сылтăмран» е «сулахайран» касмалли майсем пур (6-мĕш ӳкерчĕк). Çак меслетпе противника питĕ çывăхра тĕлпулсан, унăн хĕçпăшалне сирсе янă хыççăн штыкпа чикме май килмен чухне усă кураççĕ.

Штыкпа çапăçмалли меслетсене вĕренĕ чухне çапăран е мучаларан тунă этем кĕлеткисемпе усă курмалла, прикладпа çапассине вĕрентме — тренировка тумалли пĕр вĕçĕне пысăк чăмăрлă патаксем хатĕрлемелле.

Чĕрĕ противника хирĕç пĕччен е ушкăнăн тăрса çапăçас ĕçе вĕренĕ чухне йывăçран тунă çемçе вĕçлĕ винтовкăсемпе усă курмалла.

Ушкăнпа тытăçса çапăçас майсене вĕренме малтан пĕччен шĕрĕн, унтан пĕччен икĕ çынна, виçĕ çынна тата ытларах ушкăна хирĕç çапăçассинчен пуçламалла.

Çемçе вĕçлĕ винтовкăсем çапăçакансен пичĕсем çине ятарласа маска тăхăнмасăрах çапăçма май параççĕ, боец-рукопашникăн çивĕчлĕхне ӳстерме пулăшаççĕ.

Кучухнехи çапăçусенче штыкпа тăрса çапăçас искусство ĕлĕкхинчен, паллах, нумай улшăннă, нумай тĕрлĕ меслетсемпе пуянланнă. Тăшман çине пăшалран пеме тата ăна штыкпа та прикладпа аркатмаллах пыра-пыра çапма пĕлнисĕр пуçне, кашни боецăн çул çинчи чăрмавсем урлă каçма та лайăх хăнăхмалла. Унăн лайăх маскировка тума, тĕрлĕ майсемпе малалла курăнмасăр та шăппăн шума, граната ывăтма, тăшмана снен кӳрес ĕçре, кирек мĕнле ялалапа та (кĕреçе, кирка, çĕçĕ, пуртă, патак т. ыт. те) усă курма пĕлмелле, французла кĕрешӳ меслетне е ахаль тытăçса кĕрешмелли меслетсене вĕренмелле, çаксем вĕсем пурте боецăн атака вăхăтĕнчи ĕçне çăмăллатаççĕ. Штыкпа çапăçнă чухне кам хăюллăрах та вăйлăрах, кам чăтăмлăрах та çивчĕрех тата чеерех, çавă çĕнтерет.

Çапăçура красноармеец çуменчи пĕчик кĕреçе те тăшманăн хăрушă хĕçпăшал пулса тăрать. Тăшманпа хирехирĕç тытăçса çапăçнă чухне кĕреçепе çапса винтовкăллă тăшмана та çĕнтерме пулать. Сăмахран, противник винтовкине кĕреçепе сирсе ярсан, ăна кĕреçепех пуçран лаптăкĕшпе çапма е майран касмалла çапма пулать.

Тăшманпа хире-хирĕç тытăçса çапăçасси, штыкпа тăрса çапăçасси хальхи вăрçăра сарăлсах пырать. Пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн тапанса кĕнĕ ирсĕр тăшман пирĕн мухтавлă та паттăр Хĕрлĕ Çăран вут-çулăмлă хăватне кăна мар, ун штыкĕсен çивĕчлĕхĕпе хаярлăхне те туйса илчĕ ĕнтĕ, малашне тăшманăн çав хăвата ытларах та ытларах туйса пыма лекĕ.

В. ВАСИЛЬЕВ.

1-мĕш ӳкерчĕк



2-мĕш ӳкерчĕк

3-мĕш ӳкерчĕк.

4-мĕш ӳкерчĕк

5-мĕш ӳкерчĕк

6-мĕш ӳкерчĕк

Вĕренекен ачасем 185 ĕçкунĕ тунă

ÇĔМĔРЛЕ. Тăван ялĕнчи туллимар вăтам шкулта 5-мĕш «А» класра вĕренекен ачасем Буденный ячĕпе тăракан колхоза пулăшаççĕ. Вĕсем юлашки кунсенче çĕрулми кăларнă çĕрте, каптăр татнă çĕрте тата ытти ĕçсенче ĕçлесе 4 кун хушшинче 185 ĕçкунĕ турĕç.

Уйрăмăнах вĕренӳри отличниксем, Хĕрлĕ Çара кайнă колхозниксен ачисем Валя Куманькова, София Лаптенкова, Петр Куманьков ĕçе юратса тата тĕплĕн туса пычĕç. Вĕсем кашни кун икшер ĕçкунĕ чухлĕ ĕçлерĕç.

Шкулта вĕренекенсем занятисем пĕтсен тата канмалли кунсенче красноармеецсен çемьисене пулăшаççĕ, колхоз производствинче ĕçлеççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă, Вязьма тата Брянск енĕсенче уйрăмăнах хаяр çапăçусем пулнă. Нумай кунсем хушши вăйлăн çапăçнă хыççăн пирĕн войскăсем Брянск хулинчен тухса кайнă.

Октябрĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсенне 27 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 14 самолет лĕтнĕ.

Октябрĕн 11-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 4 самолетне тата октябрĕн 12-мĕшĕнче нимĕçсен 12 самолетне перс ӳкернĕ.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче çапăçусем вăйлăнрах та вăйлăнрах пулса пыраççĕ. Германи командованийĕ çапăçăва хăйĕн çĕнĕрен те çĕнĕ чăçĕсене кĕртекĕрте ярать. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче йышлăрах войскăсем пухса, чĕрĕ вăйпа хĕçпăшалсем тĕлĕшпе питех те пысăк сухатусем туса, противник çав участокĕсенче пирĕн войскăсене хĕсме тата пирĕн оборонăна шăтарса кĕме пултарнă. Нимĕçсем урса кайсах хĕснине хирĕç пирĕн войскăсем вăйлăн тăраççĕ. Малтанлăха лапăртнă тăрăх, октябрĕн 12-мĕшĕнче хĕрӳллĕ çапăçусенче нимĕçсенне 90 яхăн танк, противникăн войскисем ларса пыракан тата боеприпассемпе тиенĕ 270 автомашинăна, тĕрлĕ калибрлă 62 орудине тата станковăй пулеметсемпе ручной пулеметсем нумай пĕтерсе тăкнă. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 12 пин çын ытла вилнĕ тата аманнă.

Танксен Н-ски чăçĕ пехотăна хӳтлесе пырса противникăн танковăй чăсне хирĕç çапăçнă, ăна çухатусем кӳнĕ. Совет танкĕсем çак çапăçура нимĕçсен 14 танкне, 6 противотанковăй орудине, 15 пулеметне, 8 минометне тата противникăн пехотине тăватă ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

Çĕр çинчи чăçсене çапăçура совет летчикĕсем активлăн пулăшса пыраççĕ. Вязьма енчи участоксенчен пĕринче пирĕн авиаци противникăн 33 танкне, 80 автомашинине пĕтерсе тăкнă, пĕр çĕре пухăннă нумай йышлă пехотăна çĕмĕрсе аркатса янă.

* * *

Ленинград облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче çапăçакан партизансем фашистла захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешӳре питех те пысăк паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса параççĕ. К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отряд пĕр уйăх хушшинче нимĕçсенне аэродромсем çинче 7 самолет çунтарса янă, 14 танк, боеприпассемпе продовольстви тиенĕ 47 автомашина, 4 орудине пĕтерсе тăкнă, çапăçусенче нимĕçсен 200 салтакне тата 14 офицерне вĕлернĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Нумаях пулмасть, отряд тăшманăн горючи турттарса пыракан 11 машинăллă автоколоннăн çине тапăннă. Çул пăрăнса кайнă çĕрте машинăсем хуллен-рех пыма тытăннă, снайпер-партизансем водительсем çине пеме пуçланă. Грузовиксем чарăнса ларнă. Хире-хирĕç пересси пуçланса кайнă, çапăçура партизансем çĕнтернĕ. Кайри машинăпа пĕрле пыракан 4 салтак кăна тарса пытанма пултарнă. Грузовиксене вут тивертсе çунтарса янă.

Çак кунсенче разведчик-партизансем нимĕçсен боеприпассем хунă складне шыраса тупнă. Юхăнса кайнă сарайне нимĕçсем снаряд ещĕкĕсем хунă пулнă. Склада фашистсен темиçе салтакĕ сыхласа тăнă. Партизансем кĕтмен çĕртен пырса тапăнса хурал тăракан салтаксене пĕтерсе тăкнă та снарядсене взрыв туса аркатнă.

* * *

Германи тылĕнчен Хĕвелтухăç фронтне килекен çырусенче нимĕç салтакĕсен амăшĕсемпе арăмĕсем вăрçа хирĕç протестлени ытларах та ытларах палăрса тăрать. Вилли Рота салтак хăйĕн арăмĕнчен питĕ тарăхса çырнă çыру илнĕ. Вăл çапла çырать: «Эпĕ питех те хуйăха ӳкрĕм. Мĕн вара эпир, çынсем? Нимĕн те мар. Эпир вăрçăсене тӳссе ирттерме çуралнă пулас, часрах пĕттĕрччĕ пĕрех хуг». Эрнст Раннунг ефрейтор патне арăмĕ пачах та хаваслă мар çырусем çырать. Акă çав çырусен хăшпĕр сыпăкĕсем: «Аннерен çыру илтĕм. Хаçатсенче кашни кунах вилнисен списокĕсене пичетлесе кăлараççĕ тесе çырать вăл; пĕр çемьерен 26 çулти тата 22 çулти икĕ ывăл пĕтнĕ. Çакă вăл питех те хăрушă... Эпир кăнтăрла та, çĕрле те шикленсех тăратпăр. Санăн пурнăçăн хăраса асапланатăп». Тепĕр çырăвĕнче вăл упăшки патне çапла çырать: «Вырăссене хирĕç пыракан вăрçа эпĕ чи хăрушă вăрçă тесе шутлатăп. Мана çитĕнӳсем савăнтармаççĕ, мĕншĕн тесен эпĕ пирĕн мĕскĕн фронтовиксем мĕнле çухатусем тӳсни çинчен, мĕн чухлĕ çамрăк çынсен хăйсен пурнăçĕсене пĕтерме лекни çинчен шухăшлатăп. Пур тĕлĕшрен те мĕн туса хăвармасть çав вăрçă—хăрушла!.. Мĕн пулĕ-ха малалла? Питер Ленца вĕлернĕ. Хĕвел тухăçĕнче пĕтнисем çинчен калакан пĕлтерӳсен вăрăм речĕсене кашни кунах шутласа пыратпăр. Пĕлетĕн-и эсĕ, кун пек чух эпир шикленсе кăна пурăнатпăр». Ватă амăшĕ хăйĕн ывăлне Альберта çапла пĕлтерет: «Кунта эпир выраçсене хирĕç пыракан вăрçа мĕнлине халиччен пулнă нимĕнле вăрçă пек мар туйса тăратпăр. Пирĕн пĕр ĕмĕт кăна: пĕтĕрччĕ вăл часрах».

Октябрĕн 13-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă, Вязьма енче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пулнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче пирĕн войскăсем противникăн наступлени туса пыракан чăçсене хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ. Фронтăн уйрăм участокĕсенче пирĕн чăсем контратакăсем тăваççĕ. Хасин полковникăн группи, утлă çарпа пĕрле çапăçса, противника сасартăк атакăланă та 120 грузовой тата çăмăл автомашина, 80 мотоцикл тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Рогачевский полковникăн чăçĕ нимĕç войскисене флангран атакăласа тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çын пĕтерсе тăкнă.

Çĕр çинчи пирĕн чăсене авиаци активлăн пулăшса пырать. Пирĕн самолетсем неприятелĕн резервисене пĕрмаях атакăлаççĕ тата унăн аэродромĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкаççĕ. Федянин капитанăн авиаци подразделенийĕ тăшман аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă чухне нимĕçсен «Юнкерс» йышши 10 самолетне пĕтерсе тăкнă тата нумай машинăсене сиенленĕ.

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи тепĕр участокĕнче пирĕн авиаци, противникăн наступленине хирĕç çапăçакан пирĕн çĕр çинчи чăсене пулăшса пырса, нимĕçсен темиçе танкне тата боеприпассемпе пехота тиесе пыракан 100 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград патĕнчи фронт участокĕсенчен пĕринче Родин юлташăн танковăй чăсĕ нимĕçсен противотанковăй 13 орудине, 14 станковăй пулеметне, артиллерин наблюдательнăй 4 пунктне, салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çын ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Г. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ фронтăн Хĕвеланăç енче нимĕçсем оккупациленĕ районсенчен пĕринче ăнăçлăн çапăçса пынă.

Совет войскисемпе Иран халăхĕ хушшинчи туслă отношенисем çинчен Иран хаçачĕ мĕн çырать

ТЕГЕРАН, октябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). «Эттелат» хаçат çапла палăртать: Иранра совет войскисем вырнаçса тăракан районсенче пурнăç лăпкă та йĕркеллĕ. Хĕрлĕ Çар хăйне çакăн пек тивĕçлĕн тытни, тесе çырать хаçат, Иранăн кашни патриотнех савăнтарать тата ĕлĕкхи туслă сыхăнусем халĕ те çирĕппине кăтартса парать.

Фашистсем халăх хушшинче тĕрлĕ провокацийĕ сăмахсем сарма заданисем парса хăйсен агенчĕсене пирĕн пата ярассĕ

«Правда» хаçатра нимĕç фашисчĕсен мерзавецĕсем мĕнле ултавлă тата ирсĕр майсемпе ĕçленине, вĕсем пирĕн халăх хушшинче тĕрлĕ провокацийĕ суя сăмахсем сарма хăйсен агенчĕсене мĕнле пухнине кăтартса паракан документсем пичетленсе тухнăччĕ. Фашистсем тытса илнĕ совет территорийĕнче хăйсен çавтри хăрушă та тискер ĕçĕсене туса пыраççĕ, хĕрарăмсемпе хĕрачасене ирĕксĕрлесе намăслантараççĕ, ним айăпсăр çынсене персе пăрахаççĕ, çавăнпа пĕрлех вĕсем хăйсен агенчĕсене-провокаторсене халăх хушшинче суя сăмахсем сарма, нимĕçсем халăха тивмеççĕ тесе суйма ятарласа заданисем парса пирĕн пата ярассĕ.

Аяларах эпир государство органĕсем тытса арестленĕ В. И. Алференко кăтартса панине пичетлетпĕр.

Алференко вăрçă пуçланиччен Барановичи облаçĕнчи Дворец ятлă местечкăра ĕçленĕ пулнă. Вăрçă пыракан зонăран тухса каякан бежененцемпе пĕрле вăл нимĕçсен аллине лекнĕ, çакăн хыççăн Алференкона нимĕçсем пирĕн тылра диверсиллĕ ĕçсем тума явăçтарнă.

Следстви вăхăтĕнче Алференко çапла каласа панă:

«Борисов хулинне çитиччен 50 километрта нимĕçсен офицер ертсе пыракан отрячĕ пире тытса чарчĕ. Нимĕçсем пире колхоз сарайне хăваласа кĕртсе, унта икĕ талăк хушши тытса усрарĕç. Ыйтасса кашнинчен уйрăмăн ыйтрĕç. Допроса малтан арçынсене чĕнчĕç. Çав арçынсем допросран тавăрăннă хыççăн, нимĕçсем Германие пулăшма пулатăп тесе обязательство пама ыйтаççĕ, тесе каласа панăç. Кам та кам çавăн пек подписка памасть, ăна чăпăркăпа хĕнерĕç».

Ыйту: Допрос тунă чухне нимĕçсем нумайĕшне хĕнерĕç-и?

Ответ: «Ман шутпа, допросра пурне те хĕнесе янă пулмалла».

Ыйту: Хăвăра мĕнле допрос туни çинчен каласа парăр-ха. Эсир допросран пурте хĕнесе пĕтернипе тавăрăнни çинчен каларăр. Апла пулсан нимĕçсемшĕн никам та ĕçлесшĕн пулман. Мĕншĕн-ха эсир нимĕç фашисчĕсем майлă ĕçлеме килĕшнĕ?

Ответ: «Мана допроса икĕ хутчен чĕнчĕç. Мана та, ытти сене допрос тунă пекех, офицер Гуммер допрос турĕ. Пирвайхи допросра вăл манран Совет Союзĕнчи хресченсем мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлчĕ. Эпĕ ăна Совет Союзĕнче пурăнма лайăх тесе ответлерĕм, çавăн хыççăн Гуммер сĕтел çине чышкипе çапрĕ те, мана тăма хушрĕ. Эпĕ тăтăм, унтан вăл вырăссем совет власне сирпĕтсе ямалла, терĕ. Çавăнтах вăл мана Германие пулăшса тăма килĕшмерĕ. Эпĕ килĕшмерĕм. Унтан вăл каллех мана хăратма тытăнчĕ.

Тепĕр кунне мана çĕнĕрен допроса чĕнчĕç. Гуммер мана персе пăрахатăп, тесе хăратрĕ, Германи майлă ĕçлеме пулатăп тесе подписка пама хушрĕ. Вилĕмрен хăраннипе эпĕ килĕштĕм те подписка патăм».

Ыйту: мĕнле заданисем илтĕр эсир?

Ответ: «Гуммер мана çакăн пек ĕçсем тума хушрĕ: совет войскисен тылне кайса унта пурне те нимĕçсем халăха тата тытăкана лекнĕ красноармеецсене лайăх пăхаççĕ, нимĕçсем пурте çителĕклĕ, вĕсене нимĕн те кирлĕ мар, тесе каласа пар, терĕ.»

Ыйту: Нимĕç офицерне хăвăр панă подпискăн содержанине астуса илĕр-ха.

Ответ: «Подпискăна Гуммер хăйĕн çыру кĕтеки çинчен татса илнĕ хут листи çине хăй çырчĕ. Халь эпĕ тĕплĕнех астăваймастăп, унта тем çырнă. Кăшт астунă тăрăх, вăл подписка çине çапла çырнăччĕ пулас: «Эпĕ, гражданка Алференко Валентина Ивановна, 1916 çулта Новосибирск облаçĕнче çуралнăскер, Совет Союзне хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Гуммер офицер Германие пулăшас тĕллĕпе паракан распоряженисене пурнăçа кĕртме, колхозсемпе совхозсене пĕтерме, совет завочĕсене тата фабрикисене сиен кӳме, телеграфа телефон сыхăнăвне çĕмĕрме, халăха Германи майлă агитацилеме пулатăп».

Ыйту: Апла иккен, нимĕçсем халăха лайăх пăхни çинчен каласа пама çеç мар, сире диверсиллĕ ĕçсем тума та задани панă пулнă.

Ответ: «Çапла, Гуммер санăн телеграф тата телефон сыхăнăвĕсене çĕмĕрмелле пулать, терĕ, анчах вăл ун пирки сахал каларĕ. Пуринчен ытла вăл мана пирĕн войскăсен тылĕнче тĕрлĕ сăмахсем сарма, пурне те, чăн малтанах колхозниксене, нимĕçсем халăха нимĕн чухлĕ те сиенлемеççĕ, вĕсем халăха лайăх пăхаççĕ тата хресченсен нимĕçсенчен хăрамалла мар, вĕсем нимĕçсем пырса кĕрсен те ялтан тухса каймалла мар тесе каласа пама хушрĕ».

Ыйту: Вара эсир çакна ăнентĕр-и? Чăннипе нимĕçсем пирĕн халăх çине мĕнле пăхнине эсир пĕлместĕр пулать-и?

Ответ: «Çук, эпĕ Гуммера ăненмен. Нимĕçсем пирĕн халăхсене мĕнле асаплантарса мăшкăлланине эпĕ хам куçпа куртăм. Эпир Борисов хулинне нимĕçсенчен тарса тухакан вырăнти халăхпа пĕрле пынă чухне нимĕç самолечĕсем, мирлĕ халăх куçнине куратăркачах, пирĕн çине темиçе хутчен пыра-пыра печĕç, нумайĕшĕ аманса тата вилтсе юлчĕç. Вĕсен йышĕнче хĕрарăмсемпе ачасем те пур. Пĕр тĕлте пире винтовкăсемпе хĕçпăшалланнă нимĕçсем тытса чарчĕç.

Ыйтса тĕпчеме пуçларĕç, камсем эпир тата ăçта каятпăр. Унтан халăх хушшинчен нимĕçсем 18 çынна суйласа илчĕç те çул пиккинелле хăваласа кайрĕç. Пире те вĕсем хыççăн хăвалама тытăнчĕç. Эпĕ çакна куртăм: нимĕçсем çав çынсене çын çӳллĕш тăтăк патне илсе пычĕç те, вырăс çынна унта тĕртсе ӳкерчĕç, ыттисене салтаксем кĕреçесем тыттарса, çав вырăс çынна çĕр айне туса хăварма хушрĕç.

Çынсем пурте тĕрлĕ енне тарма тытăнчĕç, салтаксем таракан çынсем çине пеме пуçларĕç. Çынсем мĕнле ӳкнине эпĕ хам курса тăтăм. Çĕрĕпе вăрманта пытанса выртрăмăр.

Тепĕр кунне эпир Минск енне кайрăмăр. Пĕтĕм çул тăршшĕпе бежененсем пычĕç. Вĕсем фашистла тискер кайăксем халăха асаплантарни çинчен каласа панăç. Эпĕ итлесшĕнех пулмарăм, мĕншĕн тесен вĕсем çавтри пысăк хăрушлăхсем çинчен каласа панăç. Каярахпа çав тискерлĕхе эпĕ хам куртăм. Эпир сарайĕнче ларнă чухне нимĕçсем пире те çавăн пек асаплантарса мăшкăлларĕç».

Ыйту: Нимĕçсем сарайне мĕçе çынна хупса лартрĕç тата вĕсем сирĕнпе мĕн турĕç?

Ответ: «Сарайĕнче эпир 200 çын ытла пултăмăр. Хĕрарăмсем питĕ нумайччĕ. Ачасем те пурччĕ.

Пире сарайне хăваласа кĕртнĕ хыççăнах пирĕн пата офицер Гуммер кăйăн салтакĕсемпе пĕрле пычĕ те, кам Германире юлас тесе шутлать, тесе ыйтма тытăнчĕ. Паллах, никам та килĕшмерĕ. Гуммер кашни арçын патне пырса уяран Германире юлма килĕшетĕн-и, тесе ыйтрĕ, килĕшменнине чăпăркăпа çапрĕ, ун хыççăн ăна салтаксем хĕнеме тытăнчĕç. Арçын чĕнчĕр юн пулчĕ. Нимĕçсем кашнинех çавăн пек турĕç. Гуммер пирĕнтен кашнин патнех пырса пире кашнине пĕр ыйтăвах пачĕ, хирĕç ответлекене чăпăркăпа çапса хăварчĕ, унтан салтаксем сиксе ӳксе алла мĕн лекнĕ çавăнпа хĕнерĕç. Людмила Ивановна Мельчукова, 16 çултискер: «Нимĕн те пĕлместĕм, эсир вырăссем мар, эпĕ сире ăнланаймастăп» тесе ответлерĕ. Çавăн пек ответленĕшĕн Гуммер хăйĕн салтакĕсене хĕрачана тытса намăслантарма приказ пачĕ. Салтаксем хĕрачана тытрĕç те вăрмана илсе тухса кайрĕç.»

Ыйту: Çав хĕрачан кунçулне пĕлетĕр-и эсир?

Ответ: «Çапла, пĕлетĕп. Мельчуковăна илсе кайнă хыççăн салтаксем вăрмана хĕрарăмсем нумай илсе кайрĕç, вăл шутра мана та. Вăрманта эпĕ çакна куртăм: пĕр ывăç сумĕнче хăмасем тăраççĕ, çав хăмасем сумне Мельчуковăна чĕрĕллех пăшхăсемпе чиксе пăталаса лартнă. Нимĕçсем пирĕн куç умĕнчех Мельчуковăн кăкăрне касса илчĕç тата çын ашĕн юнлă татăкĕсемпе унăн пиччĕ сĕрчĕç. Ытти салтаксем çав вăхăтра кулса тăчĕç.

Мельчуковăпа пĕрле Варвара Михайловна Березниковăна та вăрмана илсе кайнă пулнă.

Ăна та, ытти хĕрарăмсемпе хĕрачасене асаплантарнă пекех, нимĕç салтакĕсен пысăк ушкăнĕ ирĕксĕрлесе намăслантарнă. Çакăн хыççăн салтаксем унран мăшкăлласа кулнă, унăн кăкăрĕсене касса илнĕ, ӳтне çĕçĕсемпе касса вакланă, унтан персе пăрахнă. Эпĕ хĕрарăмсемпе хĕрачасен виллисене нумай куртăм. Вăрманта яланах хĕрарăмсем кăшкăрни, асаплăн макăрни тата пăшалсенчен пеннисем илтĕнсе тăчĕç. Нимĕç салтакĕсем нумайĕшĕ ӳсĕр, вĕсем яланах хытă кулчĕç. Нимĕçсем нумай хĕрарăмсене, вăл шутра мана та, салтаксен пĕтĕм ушкăнĕпе ирĕксĕрлесе намăслантарчĕç. Малтанхи расра эпĕ фашистсен майлă ĕçлеме тата совет граждăнĕсем хушшинче суя сăмахсем сарма килĕшмен пирки, офицер Гуммер салтаксене чĕнчĕ, мана тытса ирĕксĕрлеме хушрĕ. Салтаксем мана тытрĕç те, вăрмана илсе кайрĕç, унта мана 8 çын намăслантарчĕç. Мана, тăпран тухăскере, вăрмана пăрахса хăварнă, нумай хĕрарăмсем вăрманти каялла тавăрăнаймарĕç. Пирĕн колонăри 75 хĕрарăмран 35 хĕрарăмпа хĕрачана ирĕксĕрленĕ тата нимĕçсем тискеррĕн вĕлернĕ. Çакна эпĕ лайăх пĕлетĕп. Ытти хĕрарăмсен пуркаçне эпĕ пĕлейместĕп».

Çамрăксен Лондонри интернационаллă митингĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Лондонри Альберт Холл ятлă чи пысăк залра çамрăксен интернационаллă митингĕ пулса иртнĕ. Митинга 20 национальноçăн представителĕсем пухăннă. Митинг «Çĕнтерӳшĕн!» текен логунгпа пулса иртнĕ. Вăл гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳре çамрăксем пĕрлĕхлĕ пулнине, Совет Союзĕпе туслă пулнине кăтартса паракан демонстраци пулса тăнă. Зала Великобритани, Совет Союз, Польша, Чехословаки, Франци, Норвеги, Бельги, Голланди, Греци тата ытти çĕршывсен ялавĕсемпе илемлетнĕ. Митингра Майский, Сикорский, Рипка Кассен, Симопулос пулнă. Совет Союзĕн посолне Майские митинга пухăнисем тăваллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Залра салтаксем, моряксем, летчиксем, медицина сестрисем нумай пулнă. Митинга Англи королĕн, Черчиллĕн, Бенешĕн, Сикорскин, Цудеросăн тата Майскин саламĕсене вуласа панипе пуçланă. Совет çамрăкĕсем янă телеграммăна пысăк хавхаланупа кĕтсе илнĕ.

Саламсем хыççăн Англин ĕçлев тата нациллĕ повинность енĕпе ĕçлекен министрĕ çар кабинечĕн членĕ Эрнст Бенин сăмах тухса каланă. Бенин каланă хыççăн митинг малалла тăсăлнă. Тĕттĕмлетнĕ залра, прожекторсен тĕрлĕ тĕслĕ сутинче, сцена çине Англи салтакĕсем, вĕсемпе пĕрле Чехословаки, Польша, Бельги салтакĕсем тата ирĕклĕ Франци, Норвегин тинĕс-çар флочĕсенчи моряксем, хăйĕн нациллĕ костюмне тăхăннă гречанка, югославкинчен совет авиацин майорĕ Швецов тухнă. Пĕрин хыççăн тепри микрофон патне пырса, вĕсенчен кашни хăйĕн тăван чĕлхипе çак декларацине калана: «Мĕнпур тĕнчери çамрăксене салам. Пирĕн ирĕклĕхшĕн кĕрешни сирĕн ирĕклĕхшĕн кĕрешнинех пулать. Çĕнтерӳ патне малалла!».

Швецов тухса каланине тăваллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Вăл хăйĕн англичансен чĕлхипе каланă кĕске сăмахĕнчо совет çамрăкĕсем мĕнпур тĕнчери çамрăксемпе туслă пулни çинчен, совет çамрăкĕсем татăклă çĕнтерӳ пирĕн алăра пулассине çирĕппĕн шанса тăни çинчен пĕлтернĕ.

Митингăн чаплă пайĕ вĕçленнĕ хыççăн çамрăксен митингĕ чĕнсе калана-сене вуласа панă. Çав чĕнсе каланисенчен пĕринче çапла каланă: «Совет Союзĕнчи çамрăксем! Эпир сире çавтери паттăр та çирĕп пулнишĕн саламлатпăр. Мĕнпур Европăна ишĕлтерессине хăратакан вăя эсир чарса лартрăр. Çав улăпла кĕрешӳре эпир сирĕн союзниксем пулса тăратпăр. Эсир тăшмана мĕнле хăватлăн пыра-пыра çапатăр, эпир те ăна çавăн пекех çапма сăмах паратпăр». Митинга хупас умĕн мĕнпур тĕнчери çамрăксен декларацине вуласа панă.

Германире лару-тăру çивĕчленсе çитнĕ

ЦЮРИХ, октябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Ютçĕршывсен тата Германи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германире лару-тăру кунран кунах çивĕчленсе пырать. Германире хуçалăх пурнăçĕ йĕркерен тухнă. Хальхи вăхăтра хуласене нимле продовольстви турттарса пыни те çукпа пĕрех. Халăх юлашки запассене çисе пĕтерет. Германи хаçачĕсем халăха продуктсене перекетлĕн тыткалама чĕнеççĕ, сывăхри вăхăтра продовольстви турттарса пырас ĕç лайăхланасси курăнмасть, мĕншĕн тесен чугунçул транспорчĕ вăрçă хатĕрĕсене турттарать, тесе асăрхаттараççĕ вĕсем. Выçă хĕл çитнине кура, Германи халăхĕ, лайăхрах пурнăç условийĕсене шыраса, çĕршывăн пĕр районĕсенчен тепĕр районне куçма васкать. Çакă вăл транспорт ĕçне татах та ытларах йывăрлатать. Нумай пулмасть Лейпциг ярмаркинче пулнă пĕр купец çапла каласа панă: «Эпĕ Германире мĕн курни йĕркелĕхпе нихăш енчен те çыхăнмасть. Елĕк Пруссири чугунçулсем тăрăх сӳреме епле лайăхчĕ, халĕ вăл çулсем çине пăхма та хăрушă. Вокзалсенче тем чухлĕ халăх масси, вĕсем пĕр-пĕрне тĕртклесе хĕçеççĕ, выранăн тӳпелешсе каяççĕ. Сурçĕртен те, хĕвеланăçĕнчен те халăх кăнтăра васкать, кăнтăрти халăх хĕвеланăçне куçать. Пĕтĕм халăх çитес хĕрен хăраса ӳкнĕ, мĕншĕн тесен халь ĕнтĕ вăрçă час пĕтессине текех никам та ĕненмест».

Германире йĕркеллĕ пурнăç пăсăлса кайни кашни утăмрах палăрса тăрать. Германи хаçачĕсем нумаях пулмасть влаçсен çĕнĕ распоряженине пичетлесе кăларнă, çав распоряжени тăрăх карточкăпа паракан куллен кирлĕ таварсен нормине татах та чакарнă. Пурте пĕлеççĕ, промтаварсем памалли книжкă карточкăсемпе халăх ним те илеймен пекех. Çĕнĕ карточкăсем тăрăх промтаварсем илмелли норма пĕр виççĕмĕш пайĕ чакать. Икĕ çул ытла пыракан вăрçă вăхăтĕнче халăх пур пек тумтир тата атă-пушмак запасне йăлтах тăхăнса çĕтсе пĕтернĕ. Мĕнле те пулин тумтир е атă-пушмак тупса илме пачах та май çук. «Франкфуртер цейтунг» хаçат тата тепĕр распоряжени пичетлесе кăларнă, ку распоряжени тăрăх, арçынсен, хĕрарăмсен тата пĕчĕк ачасен пуçа тăхăнмаллисене йăлтах карточкăпа кăна сутма тытăнмалла. Пĕтĕм çĕршывĕпе юрăхсăра тухнă тумтирпе кĕпе-йĕм таврашне пуçтарас ĕç пырать. Çав утиле йăлтах пăрахăçа тухнă кив япаласене юсама ятарласа уçнă мастерскойсене парса тăраççĕ. Çак мастерскойсенчен çав япаласем халăха сутма каяççĕ. Германири «Дас Рейх» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германире нумай хуласенче юсанă кив япаласене сутакан магазинсем уçнă. Хаçат çав кив япаласене те халăха карточка тăрăх сутмалла тăвас пулать, тесе çырать.

Халăх выçса пурăннине тата вăл яланах хăраса тăнипе халăх хушшинче чирлекенсем нумайланса кайнă. Анчах Германире врачсем тата медикаментсем çитмеççĕ. Фашистла влаçсем халăха яланах — чир-чĕре мĕнле те пулин врачсене чĕнмесĕрех, имçамсем илмесĕрех ирттерсе яма хушаççĕ. Германири «Вестдейче бесбахтер» хаçат неврастениксене вăрçма тытăннă. «Вĕсем текех имçам тавраш-пе нервăсене çирĕплетме пулать тесе ан та шухăшлаччăр, çывăрма пулăшакан тата ыратнине çăмăллатакан имçамсемпе медицина наукинче кăтартса панă тĕрлĕ справкăсем вĕсемшĕн чăнах та кирлĕ япаласем тесе ан шухăшлаччăр», тесе çырать çав хаçат. Вăл çырнă тăрăх — «выранлă çăлтавçăрах врачсене кансĕрлекен çын — Германи интересĕсене хирĕç тăрать имĕш. Влаçсем чирленĕ çынсемпе çапла хăтланнине пула, хăйсем тĕллĕнех сыватма хăтланакан çынсен тата имçамсене вăрттăн сутакансен шутне çеç ӳстерсе янă. «Нейес Винертагеблатт» хаçат çырнă тăрăх, пĕтĕм Германипе илсен, унта хальхи вăхăтра сутакан имçамсен икĕ виççĕмĕш пайне врач рецепчĕсĕрех сутаççĕ.

Халăх кăмăлсăрланни ӳссех пынине Оверсис ньюс агентствин Цюрихри корреспонденчĕ лайăх кăтартса парать. Вăл çапла çырать: «Баденран, Мюнхенран тата Германири ытти хуласенчен килекен çынсем каланă тăрăх, Кăнтăр Германире Пруссие хирĕçле шухăш-кăмăлсем вăйланаççĕ. Кунти лару-тăру çивĕчленсе пыни ака мĕнле çăлтавран килет: Кăнтăр Германире тем чухлĕ ялсем хăйсен вăйпитти халăхĕсĕр тăрса юлнă, вĕсен вăйпитти халăхĕ йăлтах Хĕвелтухăçĕнчи çапăçусенче вилсе пĕтнĕ. Кăнтăр Германи салтакĕсенчен тăракан полксен темиçе батальонне Хĕвелтухăçĕнче ним юлмиччен пĕтерсе тăкни çинчен сарăлнă хыпара илтсен, кунти халăх уçăнах Берлинри правительствăна улăштармалла тесе каласма пуçланă. Хăшĕ-пĕрисем çапла шухăшлама пăхаççĕ: нацистсем Кăнтăр Германи халăхĕнчен тунă полксене юри пĕр шеллемесĕр пĕтереççĕ, вĕсене пĕтерни нацистсене промышленноçлă районсенче — Берлинра тата Рейн облаçĕнче — вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсене путарса лартма кирлĕ, теççĕ вĕсем».

Правительствăна хирĕçле шухăш-кăмăлсем ытларах та ытларах вăйланса пыраççĕ. Оверсис ньюс агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Берлинран тавăрăннă пĕр швед промышленникĕ çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ имперски канцеляри çурчĕ умĕнче пĕр хĕрарăм хăйне хăй вĕлернине куртăм. Çав хĕрарăм: «Гитлерла нацистсен партийĕ тĕп пултăр!»—тесе кăшкăрса ячĕ те, вара хăйне хăй вĕлерчĕ», — тенĕ. Çак хĕрарăм хăйне хăй вĕлерни Совет Союзĕпе пыракан вăрçа хирĕç никам организацилемесĕрех пысăк демонстраци пуçласа янă. Демонстрацие хутшăннă темиçе çынна гестапо çавăнтах арестленĕ. Çакна куракан швед промышленникĕ каланă тăрăхах, çав хĕрарăм траурлă тумтирпе пулнă, хăйне хăй пĕтерес умĕн вăл пĕр хаçат татăкĕпе сулкалланă, ку хаçат татăкĕнче совет фронтĕнче пĕтнĕ салтаксен шутĕнче унăн упăшкипе ывăлĕн ячĕсене пичетленĕ пулнă.

Вооруженине кивçен е арендăна парасси çинчен кăларнă закона пурнăçа кĕртме укçа-тенкĕ хушса пани

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин пĕлтернĕ тăрăх, США-н представительсен палати воружение кивçен е арендăна парасси çинчен кăларнă закона пурнăçа кĕртес ĕç валли 5.985 миллион доллар укçа хушса пама палăртакан закон проектне ырланă, çак закон проектне ырласа 328 çын, хирĕç—67 çын сасăланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш Совет Писателĕсен Союзĕн Правленийĕ Яков Гаврилович Упписателĕн ачи

ЯКОВ

вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—23, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7104. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 490. Ф. б. 58 84 п. л.